Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮНЬ 20 ТУНТИКУН 139 (4952) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Суйлавçăсен спискисенчи йăнăшсене пайанах тӳрлетер

Пур çĕрте те, республикăн пур кĕтесĕсенче те лозунгсем, плакатсем: „Июнĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун", „Пурте суйлава!"—тесе чĕнеççĕ. Çавăн çинчен радиопа хаçатсем кашни кун асăрхаттарса тăраççĕ. Довереннăйсем, агитаторсем, калаçу ирттерекенсем, хаçат-журнал вуласа паракансем халăха коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Суйлавçăсем суйлав участкисенче суйлавçăсен спискисенче хăйсен хушамачĕсем пуррипе-çуккине, тĕрĕс çырнине тĕрĕслеççĕ. Хапрăк-савăтсенче, колхозсенче, кандидатсемпе тĕлпулнă май, суйлавçăсен пухăвĕсем, митингсем суйлав техникине вĕрентес тĕлĕшпе кашни кунах çĕршер-пиншер калаçусем пулса иртеççĕ. Çакăнпа тулли халĕ пирĕн суйлав умĕнхи кунсем. Халĕ суйлав кампанин чи хĕрӳ тапхăрĕ пырать.

Суйлав кунĕччен пилĕк кун кăна тăрса йулчĕ. Халĕ, суйлава таччăнах çитсе тăнă тапхăрта, партипе совет организацийĕсен, округ тата участкă суйлав комиççийĕсен хăйсен умне пĕр ыйту лартас пулать: пирĕн парти, Сталин йулташ панă кăтартăва—РСФСР Верховнăй Совечĕн тата Автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавне ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланинчен тата йĕркелĕрех, тата лайăхрах ирттермеле,—тенине ăнаçлăн пурнăçлама мĕн кирлине пурне те туса çитерне-и, суйлава пур йенчен те тивĕçлипе хатĕрленсе çитнĕ-и?

Çак ыйту çине чылай пуçламĕш парторганизацисем, йалсоветсем тата суйлав комиççисем кăмăла каймала ответ пама пултараймасçĕ-ха. Вĕсем суйлав кампанийĕ кашни парторганизацишĕн, кашни коммунисшăн пысăк екзамĕн пулса тăнине манаççĕ.

Сталинла Конституци никĕсĕ çинче тунă суйлав саккунĕ йалсоветчĕсемпе хула совечĕсем çине суйлавçăсен спискисене тăвас ĕçе хунă. Ку вăл технически ĕç кăна мар, политикăлă пысăк ответлă ĕç. Анчах хăшпĕр йалсовет руководителĕсем çакна пайан куна çитсе те тивĕçлипе ăнланса илмен-ха.

Суйлавçăсен спискисенчи йĕркесĕрлĕхсем çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пĕрре кăна мар çырнă ĕнтĕ. Ун пирки редакцине халĕ те сахал мар çыру килет. Вăл çырусем суйлавçăсен спискисенче кирлĕ йĕркелĕхе халĕ те туса çитерменни çинчен калаççĕ.

Пирĕн корреспондент Медведĕв йулташ çапла çырса пĕлтерет:

„Вырăскас Пикших (Канаш р.) йалсовечĕ суйлавçăсен спискине тĕрĕс туман. Спискăра суйлавçăсен çулĕсемпе йачĕсене улăштарса çырса пĕтернĕ. Çпиридонавăн хушаматне—Çтепанăв, тесе çырнă. С. Григорйĕв йулташ 1916 çулта çуралнă. Унăн çулне спискăра 1918 çулта çуралнă, тесе çырнă.

Спискăри йăнăшсем çинчен суйлавçăсем йалсоветне жалăбăсем парса пăхнă. Апла пулин те, йалсоветĕнче ĕçлекенсем вăл йăнăшсене тӳрлетмеççĕ-ха".

Шăхасан йалсовечĕ чукунçул тунă çĕрте ĕçлекенсене—79 çынна, вĕсен кирлĕ документсем (справкăсем) пур пулсан та, суйлавçăсен спискине кĕртмесĕр тăрать. Райĕçтăвком йалсоветпа йунашарах пулсан та çак фактăна кайса тĕрĕслемен.

Хирлеппуçĕнчи (Елĕк р.) суйлав участкинче çакнă суйлавçăсен спискинче йăнăшсем нумай. Суйлавçăсем хăш йалта пурăннине чылай çĕрте тĕрĕс çырман. Урăх йалсовета куçса тухнă хĕрарăмсене те спискăна кĕртнĕ. Суйлавçăсен спискине алфавит йĕркипе çырман. Спискă çине йалсовет пичет пусман. Спискăка кĕменнисем татах та пулĕ, тесе пичет пусмасăр тăратпăр, тет йалсовет председателĕ.

Илйинка йалсовечĕ (Тутаркас р.) тунă спискăра суйлавçăсем хăш уйăхра çуралнине кăтартман. Çав районрах Калайкасси йалсовечĕ 1920 çулта çуралнисене чылайĕшне спискăна кĕртмесĕр хăварнă.

Чатукассинче (Трак р.) суйлавçăсен спискинче: „Йевдокимăва Мирон Йевдокимăвич,—тесе йăнăш çырнă тĕслĕхсем курма пулать.

Суйлавçăсен спискинче йăнăшсем, варланчăксем, йалсовет председателĕпе çекретарĕ алă пусманни, пичет пусманни,—сайра мар. Уйрăм вырăнсенче тĕрĕс, чипер çырнă спискăсене те типтерлĕ усрама пĕлмеççĕ: спискăсене çăмăр айĕнче тытаççĕ, хĕвелпе сарăхтарса йараççĕ т. ыт. те. Анат Туçара (Патăрйел р-нĕ) суйлавçăсен спискине урама тухса çакнă, спискă пĕтĕмпех хĕвелпе сарăхса кайнă—вулама май çук. Кун пек тĕслĕхсем пĕрре-иккĕ кăна мар.

Мĕн çинчен калаççĕ-ха çак тĕслĕхсем? Хăшпĕр йалсоветсем тата райĕçтăвкомсем суйлавçăсен спискисене тăвас ĕç çине бюрократла, чиновникле пăхнине кăтартаççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕсен, парти райкомĕсен суйлавçăсен спискăсем çинчи йăнăшсене тӳрлетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемеле пулать. Суйлавçăсен спискисене пур çĕрте те тĕплĕн пăхса, тĕрĕслесе тухмала. Пĕр çынна та спискăка кĕртмесĕр хăварни ан пултăр, пĕр йăнăш та ан пултăр!

Пирĕн суйлавсем—тĕнчери чи демократилĕ суйлавсем. Суйлавра пулни совет гражданинĕн пурнăçĕнче политикăлă пысăк событи. Çавăнпа та вăл суйлава хаваслансах хатĕрленет. Унăн ĕмĕчĕ, шухăшĕ—çĕршыв умĕнчи хăйĕн хисеплĕ тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртесси—суйлавра пуласси, коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласси.

Суйлавçăн хисеплĕ правине, тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртесси, ăна суйлавçăсен спискине кĕртнинчен килет. Спискăка кĕртмесен вăл суйлава хутшăнма пултараймасть. Суйлавçăна суйлавран айăкка тăратса хăварни вăл—тăван çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать, суйлавçăран Сталинла Конституци панă правана туртса илни пулать. Çавăн пек туни вăл халăх тăшманĕсемшĕн çеç кирлĕ. Çакна кăшт та манма йурамаст.

Суйлав кунĕ çывхарса çитрĕ. Суйлавçăсене пурне те суйлава хутшăнтарасси—чи паха, хисеплĕ ĕç. Ăна пурнăçа кĕртес ĕçре суйлавçăсен спискисене йĕркелĕ туса çитересси калама çук пысăк вырăнта тăрать. Çавăнпа та суйлав спискисенчи йăнăшсене, çитменлĕхсене пайанах, хăвăрт тӳрлетсе çитерес пулать.

Июнĕн 12-мĕшĕнче Грузипе Армени халăхĕсем коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕшĕн, Аслă Сталиншăн пысăк çĕкленӳпе, хаваслăхпа сасăларĕç.

Чăваш халăхĕ суйлав кунне—историлĕ куна—июнĕн 26-мĕшне пит те пысăк уйава кĕтнĕ пек хаваслăнса кĕтет. Вăл кун чăваш халăхĕ ĕççыннисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан коммунисла парти çинчен шухăшласа, сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăлĕ, чечеклейекен социалисăмлă тăван çĕршыва, коммунисла партине, Аслă Сталина вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартĕ.

Пирĕн кандидатсем шанчăклă, епĕ вĕсемшĕн сасăлатăп

Июнĕн 26-мĕшĕ—суйлав кунĕ. Вăл кун епĕ суйлав урни патне пырса хамăр хушăмăртан тухнă чи шанчăклă çынсемшĕн сасăлатăп.

Пирĕн Йункă (Тутаркас р.) суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Михаил Çеменăвич Кнаçĕв йулташ кандидатурине тăратнă. Кнаçĕв йулташа епĕ авăн пĕлетĕп. Вăл совет влаçĕшĕн, парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшать. 1932 çултанпа вăл парти ретĕнче. 1929 çулта вăл колхоз тăвас тĕлĕшпе хытă тăрăшса ĕçлерĕ, хресченсене колхоз çинчен лайăх ăнлантарса пачĕ.

Епĕ, хамăрăн Йункă суйлав округĕнче ытти суйлавçăсем пекех, суйлав кунĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн — Кнаçĕв йулташшăн тата РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн—Калининă йулташшăн сасăлатăп.

Г. Тарăв.

1937-мĕш çулхи июнĕн 18-мĕш—20-мĕш кунĕсенче Мускавран—Çурçĕр полюсĕ урлă—Çурçĕр Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсене тĕнчере пĕрремĕш хут вĕçсе каçнă паттăр совет лётчикĕсем—Совет Союзĕн Геройĕсем: Александр Белйаков, Валерий Чкалăв тата Георгий Байдуков.

Мускав—Çурçĕр полюсĕ—Çурçĕр Америкă

Чкалăв, Белйаков, Байдуков вĕçевĕ çулталăк тултарнă тĕле

Совет Союзĕн Геройĕсем—Чкалăв, Белйаков тата Байдуков йулташсем тĕнче историнче пĕрремĕш хут Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна самолётпа вĕçсе çитни пайан, июнĕн 20-мĕшĕнче, çулталăк тултарчĕ.

Етем ывăл-хĕрĕ нихăçан та пырса курман полйар облăçĕсем урлă туса ирттернĕ çав вĕçеве пĕтĕм тĕнче сăнаса тăчĕ. Ку тĕнчичен етем пырса кĕмен пăрлă талкăшсем урлă мухтавлă совет самолёчĕ иртсе кайрĕ. Сталин йулташ тата партипе правительствăн ытти руководителĕсем герой-лётчиксене хĕрӳллĕн саламларĕç, халиччен пулман вĕçев туса ирттернĕ совет лётчикĕсен геройсăмне лайăхрах ăнланас тесен, вĕсем вĕçнĕ маршрута пĕлни кирлĕ.

Мускавран Шурă тата Баренц тинĕсĕсем патне çитмелли çул хăнăхнă, халăх пурăнакан вырăнсем урлă выртнă. Унтан шыв тата ванчăк пăр çийĕпе вĕçме тивнĕ. Мускавран виçĕ пине йахăн километрта Франц-Иосиф çĕрĕн утравĕсенчен иртсе кайнă. Çак архипелагăн чи çурçĕрти утравĕнчен—Рудольф утравĕнчен—900 километрта Çурçĕр полюсĕ. Çурçĕр полюсне çитсен пирĕн герой-лётчиксем Çурçĕр Америкăн çурçĕрти çыравĕсем патне çитиччченех пăр талкăшĕсем урлă вĕçсе кайнă.

Пăрлă пушхирсен çийĕпе 2.500 километр вĕçнĕ хыççăн, пирĕн лётчиксем Канадă çийĕпе тата малала Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен территорийĕпе вĕçсе кайнă.

Вĕсен самолёчĕ типçĕр çийĕпе вĕçме тунăскер пулнă, çапла пулсан та пирĕн лётчиксем вăл самолётпа 5 900 километр таран шыв çийĕпе тата пăр çийĕпе вĕçнĕ.

Çаксем ĕнтĕ пурте, Арктикăри анталăкăн йăвăр условисемпе пĕрле, вĕçнĕ çĕрте пысăк чармав пулнă. Совет лётчикĕсен пысăк маçтăрлăхĕ тата советăн чаплă самолёчĕпе чаплă моторĕсем вăл йăвăрлăха çĕнтерчĕç.

Самолёт екипажĕ—командирĕ В. П. Чкалăв, иккĕмĕш пилот Г. Ф. Байдуков тата штурмăн А. В. Белйаков йулташсем—ниçта анса лармасăр 8.600 километр вĕçсе Çурçĕр Америкăри Портланд хулине çитнĕ.

Совет лётчикĕсем çав чаплă вĕçеве мĕнле самолётпа туса ирттерчĕç-ха?

Вĕсен „РД" (рекордный—дальний) йатлă самолёчĕ совет авиаци промышленноçĕн калама çук чаплă произведени пулса тăрать. Вăл металлран тунă моноплан, вĕçнĕ вăхăтра урапусене шалала пуçтарса илет, вĕçме 5 тоннăна йахăн бензин тултарать.

Конструктăр орденоносец А. М. Микулин тунă „АМ-34-Р" мотор чăннипех те тĕнчери чи лайăх мотор шутланать.

Çурçĕр полюсĕ урлă Мускавран Çурçĕр Америкăна вĕçсе çитни вăл—ăнсăртран пулнă йапала мар. Вăл пирĕн авиацин вăйĕпе хăватне, совет лётчикĕсен—хамăр тăван çĕршывăн мухтавлă сокăлĕсен Сталин йулташ пăхса ӳстернĕ çынсен искусствипе тӳсĕмлĕхне кăтартса парать.

Фашисла государствăсен—Германипе Йапонин—авиацийĕ Испанири тата Китайри мирлĕ хуласене ишĕлтерет, хӳтлĕхсĕр хĕрарăмсене, пĕчĕк ачасемпе ват çынсене пиншерĕн вĕлерет. Совет авиацийĕ кирлĕ тĕллевсемпе пурăнать. Анчах фашисла çĕршывсем пирĕн çине вăрçăпа килес-мĕн пулсан, совет авиацийĕ тата пиншер герой-лётчиксем тăшмана ним йулмиччен çĕмĕрсе тăкĕç.

Вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекен колхозниксене лготăсем

Партипе правительствă вăрман хатĕрлес ĕç çине пысăк тимлĕх хураççĕ. Вăрман промышленноç Халăх Комиссариачĕн çак çулхи иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталсенче 22-мĕлйун кубла метр вăрман хатĕрлемеле тата 29 мĕлйун кубла метр турттарса кăлармала. Вăрман промышленноç Халăх Комиссариачĕсĕр пуçне вăрман хатĕрлес ĕçе Йăвăр промышленноç Халăх Комиссариачĕ, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ системинчи вăрман ĕçĕпе ĕçлекен организацисем тата ыт. те пысăккăн туса пыраççĕ. Правительствă 1938 çула вальли туса панă плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе питех те пысăк ĕç туса ирттермеле. Кăçалхи çул çуллахи вăхăтра вăрман хатĕрлевне çакăн пек пысăккăн туса пыни—вăл чи пирвайхи хут шутланать-ха.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет майăн 26-мĕшĕнче йышăннă решени тăрăх, вăрман хатĕрлес çĕрте ĕçлекен колхозниксем вальли те кăмрăк тата торф промышленноçĕнче ĕçлекен колхозниксемпе пĕр танах лготăсем памала тунă.

Çав лготăсем тăрăх, вăрман хатĕрлес çĕрте пĕр çултан кайа мар ĕçлеме договăр тунă колхозниксен хуçалăхĕсене йалхуçалăх налукне тӳлессинчен тата облигаци йĕркепех сĕт парассинчен хăтараççĕ. Колхозсенче тырпул валеçнĕ чухне вĕсем тырпул тата выльăх апачĕсене государствăн хатĕрлев хакĕсемпе ытти колхозниксем мĕн чухлĕ илеççĕ, вĕсем те çавăн чухлех илеççĕ.

Колхоз правленисем договăрсем тăрăх вăрман хатĕрлес çĕрте ĕçлекен колхозниксен çемйинчи ĕçлеме пултаракан çынсене çулталăк тăршшĕпех ĕç тупса пама тивĕçлĕ; кил таврашĕнчи çĕр участкисене ĕçлеме, йалхуçалăх артелĕн уставĕ кăтартнă йĕрке тăрăх, йалхуçалăхĕнчи кирлĕ хатĕрсемпе утлă транспăрт памала.

Вăрман хатĕрлес çĕре ĕçлеме тухса кайакан колхозниксен культсбор, страховкă укçине тата ытти те тӳлес тĕлĕшпе парăм пур пулсан, вĕсене уншăн çав ĕçе кайма чарма йурамаст. Вăрман хатĕрлес çĕре ĕçлеме тухса кайакан колхозниксен ун пек парăмсем пур пулсан, вĕсем çинчен ĕç укçинчен тытса йулма райĕçтăвкомсемпе йалсоветсен çав колхозниксем ĕçленĕ çĕре пĕлтермеле.

Правительствăн çав решенийĕ тăрăхах колхоз правленисен вăрман хатĕрлес çĕре ĕçлеме кайакан колхозниксене вăрăм сруклăха договăрсем тума пулăшмала. Договăр срукĕ тулнă хыççăн колхоз правленисене çав вăрман хатĕрлес çĕрте ĕçленĕ колхозниксене кайала чĕнсе илме чарнă. Çак постановленине пăсса ĕçлекен колхоз правленисен председателĕсене суд урлă ответ тыттараççĕ.

Вăрман промышленноçĕнчи хуçалăх органĕсен пĕр-пĕрне социалисăмла пулăшу парас тĕлĕшпе колхоз правленисемпе договăрсем тумала, вĕсем тăрăх колхоз правленисен колхозниксене вăрман хатĕрлес çĕре йăвăçтарас тĕлĕшпе хăйсем çине обйазательствăсем илмеле, вăрман промышленноçĕнчи хуçалăх органĕсен колхозсене материаллă тата техникăлă пулăшу парас тĕлĕшпе обйазательствăсем илмеле.

ССР Союзĕн Вăрман промышленноç Халăх Комиссариачĕ пур главксемпе трестсене те, çавăн пекех союзлă республикăсенчи Вăрман промышленноç Халăх Комиссариачĕсене те ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет майăн 26-мĕшĕнче йышăннă решенине вăрман хатĕрлес ĕçре ĕçлекен колхозниксене пурне те тата çĕнĕрен ĕçлеме пыракансене те ăнлантарса пама хушнă.

(ТАСС).

„Орденлă Чăваш республикĕ"

„Кинохроникăн" Шупашкарти студийĕ кăларнă çĕнĕ журнал

„Кинохроникăн" Шупашкарти студийĕ июнь уйăхĕнче „Орденлă Чăваш республикĕ" темăпа 5/8-мĕш номĕрлĕ çĕнĕ журнал ӳкерсе пĕтерне.

Журнал Чăваш АССР Конституцин 88-мĕш статйине çутатса парать. Унта: „Чăваш АСС Республикин гражданĕсен вĕренӳ прави пур", тесе калана.

Револющиччченхи чăваш çĕршывĕнче хут пĕлмен халăх 85 процент шутланнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче, иртнĕ 20 çул хушшинче, Чăваш республикĕ талкишпе хут пĕлекен çĕршыв пулса тăчĕ. Ӳссе пыракан çамрăк ăрăва обйазательнă йĕркепе çичĕ çул таран вĕрентеççĕ.

Республикăри 4 аслă шкул, 24 техникум, 4 рабфак республикăн хуçалăхпа культурă строительстви вальли нацилĕ кадрсем хатĕрлеççĕ.

Çаксене кăтартса панă ĕнтĕ киножурналра. Журнал режиссорĕ Б. Вейланд, оператăр—Б. Тимкин.

Журнала çак кунсенчех екрансем çинче кăтартма пуçлаççĕ.

С. К.

Райком çекретаресен курсĕ уçăлчĕ

Июнĕн 16-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ çумĕнче ПСК(б)П райком çекретарĕсен, райком инструктарĕсен тата парторгсен курсĕ уçăлчĕ. Райком çекретарĕсемпе инструктăрĕсем 2 уйăх хушшинче ПСК(б) Парти историне, ССР Союзĕн историне, парти строительствине, географи, Конституци тата ытти предметсене те вĕренеççĕ.

Курса 12 райком çекретарĕ, 13 инструктăр тата 21 парторг пухăнчĕç.

Бирӳков.

КЛАРА ЦЕТКИН

(Вилнĕренпе 5 çул тултарнă тĕле)

Германи пролетариачĕ пĕтĕм тĕнчери рабочисен йухăмне талантлă та хăйулă деятельсене панă. Вĕсенчен пĕри—Клара Цеткин. Вăл Германири револющилĕ пролетариатăн чи лайăх традицийĕсене хăйĕнче пухăнтарнă пулнă.

Клара Цеткин (хĕр чухнехи хушамачĕ Ейснер) Саксонире (Германин провинцийĕ) 1857 çулти июлĕн 5-мĕшĕнче, халăх учителĕн çемйинче çуралнă. Вăл çамрăк чухнех хăй ĕçлесе пурăнма тытăннă: учительница пулнă. Çамрăк учительница часах профессионалкă-революционеркă пулса тăрса, рабочи клас ĕçĕшĕн кĕрешме хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă.

Клара Цеткин 21 çулта чухне социал-демократсен партине члена кĕнĕ. Вăл вăхăтра Германири рабочисен пурнăçĕ калама çук хĕсĕк пулнă, социал-демократсен партин вăрттăн ĕçлемеле килнĕ, унăн членĕсене хăйаррăн хĕсĕрленĕ. Социал-демократсен çавăн пек организацине кĕрсе, çамрăк учительница часах унăн кăкринче çавтери хăйулă чĕре тапнине кăтартнă.

Польшă емигранчĕпе—Оçип Цеткинпа паллашса, Клара ăна качча тухнă. Влаçсем Оçип Цеткина Германирен кăларса йанă, вара унпа пĕрле Клара та Швейцарине, унтан Франицине кайнă. Унта Клара Цеткинăн калама çук пысăк нуша тӳсмеле килнĕ. Оçип Цеткин сывалайми чирленĕ. Вара Клара Цеткин уроксем парса, кĕнекесем куçарса, литературă ĕçĕпе упăшкине тата икĕ ачине тăрантса пурăннă.

Упăшки вилсен Клара Цеткин Германине таврăннă. Таврăнсанах вăл револющилĕ социалисăмшăн, Германири социал-демократин оппортунисла-буржуазине майлă тăракан— руководителĕсене хирĕç хĕрӳллĕ кĕрешме тытăнать. Чапла оратор, публицист тата организатăр Клара Цеткин оппортунистсене вирлĕ çапать.

1892 çултанпа Клара Цеткин социал-демократсем хĕрарăмсене вальли кăларнă „Равенство" журналăн редакторĕ пулнă. 1907 çултанпа вăл хăй пуçарнипе организациленĕ пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен социалисăмлă çекретариатне йертсе пынă.

1910 çулта Клара Цеткин сĕннипе мартăн 8-мĕшĕнче кашни çулах пĕтĕм тĕнчипе хĕрарăмсен кунне ирттермеле тунă.

1914 çулта тĕнче вăрçи —империалисăмлă вăрçă пуçлансан Германири социал-демократин оппортунисла руководителĕсем пĕтĕмпех вăрçăшăн, буржуази майлă тăнă, çавăншăн вĕсем буржуази правительствинчен пысăк чинсем, наградăсем илнĕ. Клара Цеткин хăйĕн хăватлă хăйулăхĕпе империалисăмлă вăрçа хирĕç, буржуазипе унăн тарçисене хирĕç кĕрешсе пынă. Çавăншăн ăна, 60 çула çитнĕскере, Германи правительстви тĕрмене хупнă.

ССР Союзĕнче Октябĕрти Социалисăмла Аслă револющи пуçланнă кунсенчех Клара Цеткин çамрăк совет çĕршывĕ майлă тăнă. Вăл Совет Союзĕнчи ĕççыннисен шанчăклă тусĕ пулнă.

Клара Цеткин Германири коммунистсен партине тăвакансенчен, унăн çулпуçĕсенчен пĕри. Вăл ватă пулин те коммунисла пичетре çырса, пухусенче, митингсенче тухса каласа ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ.

— Пирĕн Клара!—тесе чĕннĕ ăна Германири рабочисем. Буржуази ăна курайман тата унтан хăранă.

Коммунисла Интернационалăн III-мĕш конгресĕнчен пуçласа, Клара Цеткин пĕрмайах Коминтерн Ĕçтăвкомĕн президиум членĕ пулнă, йаланах активлă ĕçленĕ.

Клара Цеткин хăйĕн вĕри чĕрин пĕтĕм хĕрӳлĕхĕпе, çулăмлăхĕпе фашисăма хирĕç кĕрешнĕ. Вăл йулашки кунĕччченех пур тĕрлĕ оппортунистсене хирĕç пысăк хăйарлăхпа кĕрешнĕ. Вилес умĕн пĕр кун малтан, 1933 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче, Клара Цеткин II-мĕш интернационалăн тата Германири социал-демократин буржуазине сутăннă лидерĕсене хирĕç статйа çырма пуçланă. Анчах, статйине вăл çырса пĕтерейменĕ, июнĕн 20-мĕшĕнче вилнĕ.

Вăл хăйĕн йулашки кунĕсене ССР Союзĕнче ирттернĕ. ССР Союзне вăл хĕрӳллĕ йуратнă, ăна хăйĕн тăван çĕршывĕ шутланă. Клара Цеткинăна Мускаври Хĕрлĕ плошчĕтре пытарнă.

Германин аслă халăхĕ, хăй ĕретĕнче çакăн пек паттăра—Клара Цеткинăна ӳстернĕ халăх—фашисăма çĕнтеретех. Чăн-чăн Германи вăл—Карл Маркс, Фридрих Енгельс, Карл Либкнехт, Роза Люксембург, Клара Цеткин, Ернст Тельман Германийĕ. Çак Германи хăйне пусмăрлакансене çĕнтерсе, коммунисла револющи çулĕпе каять.

Ийунӗн 26-мӗшӗ—РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кунӗ

Хамӑр сасӑсене тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑл-хӗрӗсемшӗн парар!

Иван Никифӑрӑвич НИКИФӐРӐВ

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Тӗмер суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат

Комсомол ӗҫӗнче ӗҫлесси, комсомола ӗертсе пыракан работник пуласси—хисеплӗ те пархатарлӑ ӗҫ. Ку чыса кашниех тивӗҫлӗ пулма пултараймасть. Комсомолӗҫсен хӑйсене ӗертсе пыракан органа суйланӑ чух кандидата пур енчен те тӗплӗн тӗрӗслесе пӑхаҫҫӗ. Паллах, кун пек ҫынӑн нумай пӗлмелле. Унӑн совет ҫамрӑкӗсен чи лайӑх, чи ҫутӑ енӗсем пӗтӗҫсе тӑмалла. Унӑн ҫамрӑк ӑрӑван творчествӑлӑ активлӑхне пуҫаракан пулмала. Анчах та кӑна тунипе ҫеҫ комсомолӗҫсен умӗнче хисеплӗ тухма ҫук-ха. Хисеплӗх активисӗшӗн чиппа йе мундирпа йеркилмест. Хисеплӗхе большевиксен партине паттӑрӑн парӑнса ӗҫленипе ҫеҫ илме пулат. Ленин—Сталин партийӗшӗн кирлӗ пулсан пурнӑҫне те пама хатӗр ҫын ҫеҫ совет ҫамрӑкӗсем умӗнче йаланах хисеплӗре; кун пек ҫынсене ӗертсе пырас ӗҫе те хӑйуланах суйлаҫҫӗ.

Ҫак пӗчӗк очӗркра епӗр ҫакӑн пек ҫынсенчен пӗринӗн пурнӑҫ кун-ҫулӗ ҫинчен каласа кӑтартасшӑн.

... 1927-мӗш ҫулта Чӑваш вӑрмантӗсӑн Шупашкарти хаҫак савӑт шкулне Вӑрмар районӗнчи Ҫенӗ Кавал йалӗнчи 19 ҫулхи Никифӑрӑв Иван вӗренме пырса кӗрет. Кунта килиӗчен вӑл Вӑрмарти пукан-сӗтел тӑвакан хаҫак ҫуменчи шкулта вӗреннӗ, вӗренсе пӗтересҫӗс ӑна унтан Шупашкара куҫараҫҫӗ.

Никифӑрӑв Иван 1908 ҫулта вӑтам хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ.

1926 ҫулта комсомол ретне кӗнӗ. Шупашкарти хаҫак савӑт шкулӗнче пӗр ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн, ӑна комсомол йачейкин секретарне суйласа лартаҫҫӗ. 1929 ҫулта Шупашкар районӗнчи ПСҪЛКС конференцинче делегат пулат, ҫакӑнта Никифӑрӑв йулташа райком пленумӗн тата бюровӗн членне суйласа хӑвараҫҫӗ. Райкомолта агитацине пропаганда пайӗн заведуйушчийе пулса ӗҫлет. ПСҪЛКС Обкомӗн решенийӗ тӑрӑх, 1929 ҫулта ӑна Йетӗрне районне йараҫҫӗ, унта ӑна комсомол райкомӗн ҫекретарне тӑваҫҫӗ. 1930 ҫулта комсомол облаҫӗн XII-мӗш конференцийӗнче Никифӑрӑв йулташа Обком пленумӗн тата бюровӗн членне суйлаҫҫӗ. Обкомолра 1932 ҫулхи март уйӑхӗччен пропаганда теорилӗ вӗренӳ пайӗн ӗҫне пуҫарса пырат.

1932 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар ретне илеҫҫӗ. Ҫарта та вӑл хӑйӗн пултарулӑхне аван кӑтартат. Примерлӑ боец пулнипе, красноармеецсем умӗнче вӑл пысӑк хисепе кӗрет. Ахаљтен мар ӗнтӗ ҫара ҫитсен икӗ уйӑхранах ӑна полкра ПСҪЛКС бюровӗн ответлӑ ҫекретарӗнче ӗҫлеме суйлаҫҫӗ.

Никифӑрӑв Иван—ПСК(б)П членӗ (парти кандидатне 1928 ҫулта кӗнӗ, 1929 ҫулта парти членне куҫнӑ). Полкри красноармеецсене воспитани парас ӗҫре парти организацине пулӑшасси пӗрремӗш вырӑнта тӑни унӑн питех те паллӑ. Ҫавӑнпа та вӑл ӗҫе хӑйӗн мӗнпур пултарулӑхӗпе кӳленет.

Красноармеецсем тӗрлӗ ыйтусемпе те интересленеҫҫӗ: вӗсен политикӑлла ыйтусене те пӗлес килет, вулама лайӑх кӗнекесем суйласа илесшӗн, йе тата пӗр-пӗр красноармеецӑн килте мӗн те пулин пулнӑ—унӑн кӑмӑлӗ кӑштах уҫӑх мар; тепри акӑ пӑшалтан тӗл перейменни ҫинчен каласа кӑтартасшӑн, сӑлтавӗсене пӗлесшӗн,—ыйтусем нумай. Ҫамрӑк ҫекретарьшӑн красноармеецсен масси ыйтни, унӑн пурнӑҫӗ, ӗҫӗ—саккун. Вӑл пур ыйтусене те татса пама тӑрӑшат. Ҫак ӗҫре вӑл ҫартан таварничченех ӗҫлет.

Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнсан, 1933 ҫулта, парти Обкомӗ Никифӑрӑв йулташа Вӑрнарти машинӑ-трактӑр станцинче политотдел начальникӗн комсомол йенӗпе ӗҫлекен помощникӗ пулса ӗҫлеме йарат. Ку ӗҫре 1935 ҫулччен ӗҫленӗ хыҫҫӑн парти Обкомӗ ӑна Вӑрнарти МТС директорӗн политикӑ йенӗпе ӗҫлекен заместителӗ туса хурат.

1936 ҫулхи ҫентабӗр уйӑхӗнчен тытӑнса 1937 ҫулхи август уйӑхӗччен Никифӑрӑв йулташ ПСК(б)П Обкомӗн йалхуҫалӑх пайӗнче инструктӑра ӗҫлет. 1937 ҫултах икӗ уйӑх хушши ПСК(б)П Йетӗрне райкомӗн иккӗмӗш ҫекретарӗ пулнӑ. Комсомолӑн облаҫӗн XIV-мӗш конференцийӗ суйласа хӑварнӑ Обкомӑн пӗрремӗш пленумӗ 1937 ҫулхи октабӗр уйӑхӗнче ӑна ПСҪЛКС Чӑваш Обкомӗн ҫекретарӗнче ӗҫлеме лартат. Халӑхи вӑхӑтра та ҫак ӗҫрех ӗҫлет.

Иван Никифӑрӑвич Никифӑрӑвӑн кӗске биографийӗ ҫакӑн пек.

Никифӑрӑв йулташа 76-мӗш номерлӗ Тӗмер суйлав округӗнче Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ. Колхозниксем Верховнӑй Совета кама суйламаллине аван пӗлеҫҫӗ.

Никифӑрӑв йулташа парти, комсомол ҫитӗнтернӗ. Мӗн политикӑлла пурнӑҫпа пурӑнма пуҫланаранпах вӑл комсомол ӗҫӗнче хӗрсе ҫирӗпленнӗ. Унра епӗр Ленин—Сталин партине чӗререн парӑнса ӗҫлекенӗн сӑнне куратпӑр. Парти уншӑн—пурнӑҫ. Вӑл хушни уншӑн—саккун. Ҫавӑнпах ӑна халӑх та йуратат, шанат. Вӑл Чӑваш АССР Верховнӑй Советӗнче тивӗҫлӗ депутат пуласси—вӗсемшӗн паллӑ.

ТИМОФЕЙ ВАҪИЛЙӖВИЧ ВАҪИЛЙӖВ
Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет ҫекретарӗ. Ӑна Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Шӗнер (Ҫӗрпӳ р.) суйлав округӗ тӑрӑх кандидата регистрациленӗ.

АЛЕКСЕЙ АФАНАҪЙӖВИЧ МАЛИНИН
Йетӗрне Райӗҫтӑвком председателӗ. Ӑна РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Ҫӗмӗрле суйлав округӗ тӑрӑх кандидата регистрациленӗ.

Аннӑ Иваҫӑвна ВОРОНЦОВӐ

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Шӑмӑршӑ суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат

Чӑваш республикӗнчи ӗҫсынисем ийунӗн 26-мӗшӗнче Чӑваш АССР Верховнӑй Советне рабочисемпе хресченсен телейӗшӗн, социалисӑмшӑн кӗрешекен лайӑх ҫынсене суйлаҫҫӗ.

Шӑмӑршӑ районӗнчи „Знамя Октября“, „Красная звезда“, „Новая жизнь“ „1-е мая“, „Правда“ „Мотор“, „Искра“, „Трактӑр“ колхозсенчи колхозниксемпе колхозницӑсен пухӑвӗсенче Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата ПСҪЛКС Шӑмӑршӑ райкомӗн ҫекретарне Аннӑ Иванӑвнӑ Воронцована тӑратреҫ.

Аннӑ Иванӑвнӑ 1916 ҫулта хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Вӑл пирӗн вӑхӑтра—совет влаҫ условийӗнче, експлоататӑрсем ҫук вӑхӑтра ӳссе ҫитӗннӗ. Совет ҫамрӑкӗсем ирӗксӗр ӗҫлессинчен ӗмӗрлӗхех хӑтӑлнӑ. Социалисӑм ҫӗршывӗнчи ҫамрӑк ачасемпе хӗрсем хамӑр тӑван ҫӗршывӑн чӑн-чӑн хуҫисем пулма вӗренсе ӳсеҫҫӗ.

Воронцовӑ йулташ педагогикӑ техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ, 1935 ҫултанпа учителницӑра, вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ.

Воронцовӑ йулташ 1938 ҫултанпа ПСК(б)П кандидачӗ. Комсомол ӗҫӗнчи активлӑ работницӑ. 1937 ҫулхи декабӗр уйӑхӗнчеппе вӑл ПСҪЛКС Шӑмӑршӑ райкомӗн ҫекретарӗ пулса ӗҫлет. Кунта вӑл ҫамрӑксене организацилеме пултарнине кӑтартса пачӗ. Аннӑ Иванӑвнӑ колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче пысӑк шанчӑкпа усӑ курат.

Федӑр Дмитрийӗвич ЗАШЧОЛКИН

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Кладбишчӗнски суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат

Кувакинӑ районӗнчи „Ударник“, „Октаберӗн 13-мӗш ҫулӗ“ колхозсенчи колхозниксем, Кирери хӑма ҫуракан савӑтра, механизациленӗ вӑрман пунктӗнче тата Турханти вӑрман хуҫалӑхӗнче ӗҫлекен рабочисемпе служӑшчисен, инженерлӑ-техниклӑ работниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗсенче Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Федӑр Дмитрийӗвич Зашчолкин йулташ кандидатурине тӑратрӗҫ. Ӑна Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Кладбишчӗнски суйлав округ комиссийӗ регистрацилерӗ.

Федӑр Дмитрийӗвич Зашчолкин йулташ 1906 ҫулта Улатӑр хулинчи рабочи ҫемйинче ҫуралнӑ. 1921 ҫултан пуҫласа 1925 ҫулччен чернорабочи пулнӑ. 1926 ҫултан 1930 ҫулччен Улатӑрти пӑравуссем йусакан савӑтра слессӑрта ӗҫленӗ. 1930 ҫултан 1933 ҫулччен Улатӑрти йалхуҫалӑх снабжени кантурӗнче ӗҫленӗ.

1933 ҫулта Зашчолкин йулташа Улатӑр районӗнчи Стемас йалсовет председателне суйланӑ. Йалсовет председателӗ пулса 1935 ҫулччен ӗҫленӗ. Кунта вӑл массӑпа ӗҫлеме пултарнине, хӑйӗн патӑрлӑхне кӑтартӗ.

1935 ҫулхи декабӗртен Федӑр Дмитрийӗвич Пӗтӗм Сойузри Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет ҫумӗнчи совет строителствин ӗҫне вӗрентекен курсра вӗреннӗ.

1936 ҫултан ҫак вӑхӑтчченех вӑл Кувакинӑ райӗҫтӑвкомӗнче. Чи малтанах райӗҫтӑвком ҫекретарӗ пулнӑ, унтан ӑна райӗҫтӑвком председателне суйланӑ.

Зашчолкин йулташ Ленин—Сталин партийӗн чӗререн тӑрса ӗҫлет, вӑл социалисӑмлӑ ҫӗршывӑн патриочӗ, халӑх шанӑҫне тӳррӗн пурнӑҫлакан шанчӑклӑ кандидат.

Вакунсем йусакан савӑтри рабочисен кандидачӗ СТАЛИН йулташ!

КАНАШ, ийунӗн 18-мӗшӗ (хамӑр корр.). Пайан—канмали кун—Канашри суйлавҫӑсен пысӑк массовки пулса иртрӗ. Канашри ӗҫсынниҫем ватти-вӗттипех хула ҫывӑхӗнчи вӑрмана тухнӑ. Савӑт грузовикӗсем вӗҫӗмсӗр ҫӳреҫҫӗ—вӑрмана халӑх турттараҫҫӗ. Машинӑсене плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетнӗ. Акӑ пӗр машин ҫинчи лозунг:

— „Сывӑ пултӑр пирӗн пӗрремӗш кандидат, халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ, пирӗн тӑван атте, пирӗн телей, пирӗн хӗвел—аслӑ Сталин!“

Канаш ҫӗрӗсем кун пек пысӑк ҫекленёве халличен нихҫан та курман пулӗ. Вӑрманти анлӑ уҫланкӑна халӑх тулнӑ. Йывӑҫсем ҫинче хӗрлӗ йалавсем вӑркӑшаҫҫӗ. Уҫланкӑ варричи трибунӑ ҫине агитатӑрсем, доверӗннӑйсем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухаҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗм Канаш ӗҫсынисене Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ пӗрремӗш кандидатшӑн Сталин йулташшӑн сасӑлама, ҫавӑн пекех РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Канаш суйлав округӗ тӑрӑх тӑратнӑ кандидатшӑн Антонӑвӑ йулташшӑн, вакунсем йусакан савӑтри ҫак палла стахановкӑшӑн сасӑлама хӗрӳлӗн чӗнеҫҫӗ.

Вӑрманта хаваслӑ йурӑ сасси илтӗнсе тӑрат, ӑҫта пӑхан унта ташлаҫҫӗ. Мусӑкӑ кӗрлет. Оркестрсем ӑмӑртмала выљаҫҫӗ. Ҫамрӑксем хӑйсемпе пӗрле хуткупӑссем, балалайкӑсем, мандолинӑсем, гитарӑсем илсе пынӑ. Ачасене валљи карусел лартса панӑ. Акӑ, пӗр кӗтесре ҫамрӑксем биллиардла выљаҫҫӗ. Суйлавҫӑсене консулљтаци паракан сӗтелсем ӗҫлеҫҫӗ. Суту-илӳ организацисем тӗрлӗрен ҫимӗҫсем, ӗҫмелисем сутаҫҫӗ.

Массовкӑри митингра РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидат Антонӑвӑ йулташ, пӗтӗм суйлавҫӑсен кӑмӑлне палӑртса, ҫапла каларӗ:

— Канашри савӑт суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем Сталин йулташ кандидатуришӗн сасӑлама тивӗҫ илни—пит пысӑк чыс. Епӗр Сталин йулташшӑн саса пама ҫеҫ мар хатӗр, епӗр кирлӗ пулсан уншӑн хамӑр пурнӑҫа та пама хатӗр!—терӗ.

Арк. Ӗҫхӗл.

Дубӑвпа Меценатӑвӑ йулташсемшӗн сасӑлатпӑр

Елӗкри 1-мӗш номӗрлӗ суйлав участкинче суйлав пулмали ҫурта портретсемпе, плакатсемпе, лозунгсемпа илемлетнӗ. Кунтах телефон, радио, патефон пур. Хаҫат-журналсем ҫителӗклӗ ҫырӑнса илнӗ. Суйлавҫӑсем кашни кунах суйлав ҫуртне пырса ӑнланман ыйтусене ыйтса пӗлеҫҫӗ.

Участкӑра 1258 суйлавҫӑ. Вӗсене пурне те суйлав Положенисемпе Сталинла Конституцине вӗрентес ӗҫе хутшӑнтарнӑ. Халӗ участкӑри суйлавҫӑсем РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидатӑн Дубӑв йулташӑн, Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидатӑн Меценатӑвӑ йулташӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен вӗренеҫҫӗ.

Суйлавҫӑсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали кун—ийунӗн 26-мӗшӗ ҫитессе пысӑк хӑваслӓхпа кӗтеҫҫӗ. Суйлав кунӗ Верховнӑй Советсене суйлама хамӑр тӑратнӑ кандидатсемшӗн, Меценатӑвӑпа Дубӑв йулташсемшӗн сасӑлатпӑр.

Д. Матвейӑв.
Н. Романӑв.

Ҫамрӑк суйлавҫӑсен слёчӗ

ТӐВАЙ. Ҫак кунсенче ҫамрӑк суйлавҫӑсен районри слёчӗ пулса иртрӗ. Унта ҫамрӑк суйлавҫӑсем 300 ҫынна йахӑн пулчӗҫ. Слётра пӗр ыйту—РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене ҫамрӑк суйлавҫӑсем мӗнле хатӗрленсе пыни ҫинчен пулчӗ. Ку ыйтупа ПСК(б)П райкомӗн ҫекретарӗ Йарандайкин й-ш доклад турӗ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче ӗлӗкхипе халљхи суйлавсем ҫинчен ытларах чарӑнса тӑчӗ. Слётра чылай ҫамрӑк суйлавҫӑсем сӑмах туха каларӗҫ.

— Халӗ ҫамрӑксем Конституци панӑ правасемпе туллин усӑ кураҫҫӗ. Суйлава хатӗрленес ӗҫре те ҫамрӑксем активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ,—тет РСФСР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиҫҫин членӗ В. Павлӑв йулташ. Слёта РСФСР Верховнӑй Советне Суйлама регистрациленӗ кандидат Йекатеринӑ Антонӑвнӑ Антонӑвӑ йулташ пычӗ. Вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен каласа пачӗ.

В. Илйин.

Кинора Сталин йулташ сӑмахне итлерӗҫ

ИШЛЕЙ. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ май, Ишекри Сталин йачӗпе тӑракан колхозӑн пысӑк клубӗнче „И. В. Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский суйлав округӗнчи суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче 1937 ҫулхи декабӗрӗн 11-мӗшӗнче каланӑ сӑмах“ йатлӑ саслӑ фиљм кӑтартрӗҫ.

Арк. Наумӑв.

Доверӗннӑй

Ҫулахи илемлӗ кун; тӳпере кӗленче пек тап-таса кӑвак пӗлӗт, нимӗнле ҫил те ҫук, вӑхӑтран вӑхӑта ҫеҫ таҫтан хуралтсем хушшинчен, пахчари йывӑҫсем хушшинчен йӑншӑнса тухакан ӑшӑ ҫил ҫепӗҫҫӗн питрен сават. Таҫта инҫетре йешӗл уйсем, чечексемпе илемленнӗ улӑхсем ҫийӗнчен, слуда ҫийӗнчен шыв йухтарнӑ пек, ылттӑн тӗслӗ хӗвел ӑшши йухат. Хура вӑрман пӗрре ҫывхарнӑ пек, тепре инҫетеле кайнӑ пек туйӑнат. Ҫав тери ӑшӑ та илемлӗ кун пайан. Енӗр ҫеҫ „ыран пӗлӗтлӗ кун пулат пулмала“ тесе куљанса ҫӳрекен кино ӳкерекенсем, пайан ҫутӑ хӗвел пек кулса ҫӳреҫҫӗ. „Ҫанталӑк—картин ӳкерме пит аван, хӑйшӗн закас панӑ пек“—тет кинооператӑр.

Йешӗл куракпа витӗннӗ, сарлака та анлӑ плошчӗте халӑх тулнӑ; вӗсен тумӗсем ҫине пӑхсассӑн хӗвелпе куҫ йӑмахат: шурӑ, кӑвак, хӗрлӗ, симӗс тата ытти тӗслӗ илемлӗ кӗпесем тӑхӑнса пынӑ колхоз ҫамрӑкӗсем. Ҫук, ҫамрӑксем ҫеҫ мар унта, пайан уйава ватти-вӗтти, хӗрӗ-хӗрарӑмӗ—пурте пуҫтаранннӑ. Кам кӑна ҫукши унта! Ӑҫтан кӑна килмен-ши хисеплӗ хӑнасем Колљцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхоз уйавне: Зеленовкӑран, икӗ Упакассинчен, Мамалайран, Кушлавӑшран, Хапӑсран тата таврари ытти колхозсенчен пуҫтаранннӑ хӑнасем. Трибунӑ ҫинче Шупашкартан килнӗ духовой оркестр илемлӗ кӗвӗсем выљат, трибунӑ умӗнчех ҫамрӑксем мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн тӑрса тӗрлӗ ташӑсем ташлаҫҫӗ. Акӑ Колљцовкӑ вырӑсӗ Мамалай хӗрӗпе ташлат, чӑваш хӗрӗ вӑтам шкул пӗтерӗнӗ—вырӑсла аван калаҫат. Акӑ тата Упакасси каччи Зеленовкӑ майрипе ташлат: те вырӑсла калаҫаҫҫӗ, те чӑвашла—мусӑк сассипе илтӗнмест. Йепреҫ районӗнчен хӑшпӗр колхозран машинӑпа тутар ҫамрӑкӗсем те килнӗ терӗҫ, анчах палама ҫук кучӳхехи ҫамрӑка: вӗсен ҫинче саттин та пурҫӑн кӗпе, йе симӗс кӑвак майкӑ. Пыр та палла вара есӗ ӑна: те вырӑс вӑл, те тутар, те чӑваш, те ытти халӑх—пурте вӗсем телейлӑ колхозниксем, пурте вӗсем совет ҫӗршывӗн хисеплӗ ывӑлӗ-хӗрӗсем.

Астӑвӑр-ха: уйав тӑваҫҫӗ—пӗр ӳсӗр ҫын ҫук, ним кӑшкӑрашни, ахӑрашни илтӗнмест, кулса калаҫаҫҫӗ, йурлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ. Мусӑк сасси инҫете, таврана саланат. Ҫак плошчӗт вӗҫӗнчен инҫе те мар, пӗр 40--50 чалӑшта ҫук пулӗ, Потаушкӑ шывӗ йухса выртат.

Пайан уйав кунӗ пӗр ӗҫ туса иртермеле: кӑҫал Вӑрнар районӗпе Йепреҫ районӗ уйхир ӗҫне примерлӗ туса иртерес тӗлӗшпе социалисӑмлӑ догавӑр тунӑ, ҫавна кам авантарах пурнӑҫласа пынине тӗрӗслес тесе канашлу пулмала. Канашлӑва Шупашкартан партипе правителствӑ членӗсем: Г. Иванов, З. Андрейӗвӑ, С. Коротков йулташсем килнӗ. Митинг та пулмала. Ҫамрӑксем митинг пуҫланиччен мусӑк кӗввипе ташласа савӑнаҫҫӗ. Оркестрпа ӑмӑртса радио та илемлӗ кӗвӗсем калат.

Ҫак уйав кунӗ Колљцовкӑра куртӑм епӗ Хветӗр пиччене. Хӑнана чылай стариксем пуҫтаранннӑ. Мамалайри Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозран 80 ҫулхи стариксем те п ы н ӑ. И к ӗ районтан мӗн пурӗ 24 грузовикпа тата легковой машинӑсемпе, чаплӑ ййӑрсемпе пынӑ. Хветӗр пиччене епӗ клубра тӗл пултӑм. Ҫамрӑксем ташланине пӑхса киленнӗ хыҫҫӑн, вӑл митинг уҫас умӗн клуба кӗнӗ. Ыттисенчен уйрӑмах клубри йапаласене тимлӗн пӑхса ҫӳрет. Акӑ вӑл библиотекӑ шкапӗ патне пычӗ, ку йенчен пӑхат, тепӗр йенчен чӗрӗ куҫӗсемпе „виҫет“, мӗнле йӑвӑҫран тунине хыпаласа пӑхат. Паллах ӗнтӗ, хӑйсен колхозне ҫакӑн пек шкап тутарма кирли ҫинчен шухӑшлат вӑл, ҫавӑнпа ҫапла тӗплӗн пахат те ӑна. Акӑ вӑл радиоусӗла кӗчӗ, пурне те астӑват, пурне те сӑнат, коридорти плакатсене те астумасӑр иртмест.

Клубӑн чӳрече рамисене, алӑкӗсене, урайне илемлӗ сӑрпа сӑрланӑ, Хветӗр пичче ӑна та сӑнат, тытса пӑхат. „Тӗреклӗ-и? Тӗреклӗ пулсан пирӗн те ҫавӑн пекисене хамӑр клуб валљи туйанасчӗ“. Пурне те пӑхрӗ вӑл, пурне те сӑнарӗ, унтан татах ҫамрӑксем савӑннӑ ҫӗре тухрӗ. Унта та ахаљ тӑмасӗ вӑл, ытти вырӑнтан килнӗ колхозниксенчен вӗсем суйлава йепле хатӗрленни ҫинчен тата ытти ӗҫсем ҫинчен ыйтса пӗлет. Хӑйсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен каласа парат.

— Пирӗн доверӗннӑй вӑл, хастарлӑ колхозник Хветӗр пичче,—терӗ мана ун ҫине кӑтартса уйава килнӗ хӑнасенчен пӗри. Митинг пуҫланассине сиссе пулас, мусыкҫӑсем трибунӑ ҫинчен тепӗр вырӑна куҫрӗҫ. Трибунӑ ҫинче районти руководителсем, партипе правителствӑ членӗсем. Пайанхи кун тепӗр савӑнӑҫ хыпар ҫитнӗ Колљцовкӑна: Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Ҫавалкас суйлав округӗнчен тӑратнӑ кандидат, Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗ М. И. Калинин й-ш баллотировкӑна тӑма килӗшӳ панӑ. Оратӑр ҫакӑн ҫинчен каланӑ хыҫҫӑн, плошчӗте пуханнӑ халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупма пуҫларӗ. Аслӑ Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗ Калинин й-ш сывӑ пултӑр! Ур-р-а-а! Йуратнӑ ҫулпуҫӗ Сталин й-ш сывӑ пултӑр! Ур-р-а-а!—чарӑнайми кӗрлет халӑх.

Хветӗр пичче куҫӗсем савӑнӑҫпа ҫутӑлнӑ, вӑл хавассӑн алӑ ҫупат, урра кӑшкӑрат.

Нумайччен пычӗ митинг, чылай лайӑх сӑмахсем каларӗҫ унта, ҫырса та пӗтерейес ҫук. Чылайччен савӑнса кӗрлерӗ уйава пуҫтаранннӑ халӑх.

Митинг пулса иртнӗ хыҫҫӑн мана Хветӗр пиччепе паллаштарчӗҫ. Калаҫма пуҫларӑмӑр. Федӑр Васильчӑ—58 ҫулта пулин те вӑйпитти ҫын. Вӑрӑм куҫхаршийӗнче унӑн кулса тӑракан чӗрӗ куҫӗсем выљљаҫҫӗ. Калаҫма йуратакан ҫкер, уҫӑ кӑмӑллӑ ҫын. Каласа памали пит нумай унӑн. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах.

— Кун пек телейлӗ пурнӑҫ курасса ӗлӗк шанман, конешнӑ,—тет вӑл хӑмӑртарах вӑрӑм сухалне сӑтӑркаласа.—Ҫук, асра та тытман кун пек савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ курасса.

Ӗлӗк йепле нушалӑ пурӑннине каласа, пайан уйав кунӗ чӗрине хурлантарасшӑн мар вӑл, халљхи пурнӑҫ ҫинчен, хӑй пурӑнакан „Путиловкӑ“ колхоз ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен, хӑй ӗҫӗсем ҫинчен каласшӑн вӑл. Колхозра 1931 ҫултанпа тӑрат, хӑй кӑҫал 373 ӗҫкунӗ тунӑ, хӗрӗ—210 ӗҫкунӗ, 56 ҫулхи арӑмӗ те 71 ӗҫкунӗ тунӑ. Пӗрле хушсассӑн ҫемйене—654 ӗҫкунӗ тивет, 250 пӑт тӗштырӑ, тата ҫӗрулми, тӗрлӗ пахча-ҫимӗҫ. Ҫемйе виҫҫӗн, виҫҫӗшӗ те ӗҫлеҫҫӗ, пуринчен хастарла вӑл хӑй ӗҫлет.

Колхоз председателӗ Александр Йефремӑв каланӑ тӑрӑх (тепӗр кун епӗ Упакассине кайса пӑхрӑм), Хветӗр пиччен ӗҫ вӑхӑтӗнче айхи те ҫук, кӑнтӑрла акат, ҫӗрле тырӑ хураллат. Ыттисем 4 гектар акнӑ ҫӗре вӑл 6 гектар акма ӗлкӗрет.

Колхозра авторитет пысӑк унӑн, пурте хисеплеҫҫӗ ӑна, ҫамрӑксем йуратаҫҫӗ. Хветӗр пичче пирӗн примерлӑ колховник, шанчӑклӑ ҫын, теҫҫӗ пурте ун ҫинчен. Ахалтен мар ӑна доверӗннӑйа суйланӑ.

— Нумай пулмасть Улатӑра канашлӑва кайса килтӗмӗр. Унта пысӑк канашлу пулчӗ. Суйлава йепле ирттересси ҫинчен сӳтсе йаврӑмӑр,—терӗ вӑл сухалне сӑтӑркаласа.

Хаҫатсем вулат, общӗствӑ ӗҫне активлӑн хутшӑнат, коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн агитацилет.

Пӗчӗк Упакасси пӗчӗк йал мар, унта 200 кил ытла. Клубӗ Колцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозӑнни пекех: пӗр пайӗ (залӗ) тӑрӑхла ларат, тепӗр пайне урла сыпӑҫтарса лартнӑ (унӑн варринче сценӑ, пӗр пуҫӗнче колхоз правлени канцељарӗ). Колљцовкӑ клубӗнчен кӑшт пӗчӗкрех, уйрӑмӗ те ҫавӑ ҫеҫ.

— Ҫук, вӑл ҫеҫ мар,—тет Хветӗр пичче шӳт туса,—електричествӑпа калаҫакан кино ҫук-ха, ҫавсене тутарас пулат,—хушса хурат кӑмӑллӑн кулкаласа.

Упакассинчи колхозӑн та малашне хӑйӗн електростанцине калаҫакан кино пуласси куҫа курӑнсах тӑрат. Ахаљтен мар Хветӗр пичче Колљцовкӑна пырсан питӗ сӑнаса пӑхса ҫӳрерӗ. Ахаљтен мар.

Колхозра пурте Хветӗр пичче пек хастарлӑн тӑрӑшса, пилне парса ӗҫлесессӗн пурте пулӗ: електричествӑ ҫути те, калаҫакан кино та, тата ыт. те. Пурнӑҫ йӗрӗ, пурнӑҫ йухӑмӗ ҫавӑнтала илсе пырат, коммуниссен партийӗ, унӑн аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин кӑтартнӑ ҫулпала тата пуйанрах, тата илемлӗрех, тата савӑнӑҫлӑрах кунҫулсем патнеле.

Сергей Йаҫавин.

13

Чӑваш Автономлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республика

Чӑваш Автономлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑ—рабочисемпе хресченсен социалисӑмлӑ государстви пулса тӑрат̆

(Чӑваш АССР Конституцийӗ. 1-мӗш статйа).

* * *

Орденлӑ Чӑваш АССР—Российа федерацине кӗрекен вунҫичӗ Автономлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсенчен пӗри. 1920 ҫулти ийуњ уйӑхӗнче Ленинпа Сталин пуҫарнипе, ӗлӗкхи Хусан кӗпӗрнине кӗрекен Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Йетӗрне уйессӗсенчен тата Чулхулапа Чӗмпӗр кӗпӗрнисӗне кӗрекен уйрӑм уйессен пайӗсенчен Чӑвашсен Автономлӑ облӑҫне тунӑ.

Чӑвашсен Автономлӑ облӑҫне тӑвасси ҫинчен кӑларнӑ декрет ҫине Владимир Иљич Ленин алӑ пуснӑ. 1925 ҫулта Автономлӑ облӑҫран Чӑваш Автономлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республика тунӑ.

Чӑваш республикӗ Атӑл тӑрӑхӗн вӑта ҫӗрне вырнаҫнӑ. Ҫурҫӗр йенче вӑл—Мари АСС Республикӗпе, Хӗвеланӑҫ йенче—Горький облӑҫӗпе тата Мордва АСС Республикӗпе, Кӑнтӑр йенче—Куйбышӗв облӑҫӗпе, Хӗвелтухӑҫӗнче—Тутар АСС Республикӗпе чикӗленсе тӑрат̆.

Чӑваш республикӗнче пӗтӗмпе пӗр мӗлйун ытларах халӑх пурӑнат̆. Вӗсенчен виҫӗ пайран икӗ пайне йахӑн—чӑвашсем, ыттисем: вырӑссем, тутарсем, мордвасем. Халӑх йӑвалӑхӗ йенчен илсен пирӗн республика РСФС Республикӗнче малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑнат̆.

Чӑваш республикӗн ҫурҫӗр пайӗнче Йевропӑри чи пысӑк йухан шыв—Атӑл 140 километр тӑршшӗ йухса иртет, республикӑн хӗвеланӑҫ хӗррипе Сӑр шывӗ йухат̆. Республикӑн ҫурҫӗр пайӗнчи вӑта ҫӗрӗнче—Ҫавал.

Мускав—Мурӑм—Хусан чукунҫулӗ Чӑваш республикине икӗ пайа—Кӑнтӑрпа Ҫурҫӗре уйӑрат̆. Мускав—Рузайӗвка—Хусан чукунҫулӗ республикӑн кӑнтӑр йенчи пайӗ урлӑ вӑта ҫӗртен каҫса кайат̆.

Халӗ Канашран Шупашкара хывса ҫитерекен чукунҫул Чӑваш республикӗн столицине—Шупашкара Пӗтӗм Сойузри хуласемпе ҫыхӑнтарат̆. Канаш—Шупашкар чукунҫулӗ Шупашкара чукунҫулпа шывҫул транспӑрчӗн тӗвви туса хурат̆. Ҫак ҫулсем республикӑн економикинче питӗ те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Совет влаҫӗ пуҫланнӑранпа, уйрӑмӑнах сталинла икӗ пилӗкҫуллӑх хушшинче, Чӑваш республик территорийӗнче Куславкка, Ҫӗмӗрле комбиначӗсене, „Бољшевик" савӑт, Вӑрнарти фосфорит савӑчӗ, Канашри вакунсем йусакан савӑт туса лартнӑ.

Партипе совет руководствинче ларнӑ тӑшмансем республикӑн тӗп хулине—Шупашкара промышлӗнлӑҫлӑ центр тӑвас ӗҫе пур майсемпе те хирӗҫ пынӑ. Вӗсем промышлӗннӑҫ кадрӗсем ӳстерсе ҫитерессинчен темрен хӑранӑ пек хӑранӑ. Тӑшманла руководствӑна ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, чӑваш парторганизацийӗ Шупашкара промышлӗннӑҫлӑ центр тӑвас йенӗпе вирлӗн ӗҫлеме пуҫларӗ. Кӑҫал Шупашкарта пысӑк савӑтсем лартма тытӑннӑ. Ку савӑтсенче темиҫе пиншер рабочи ӗҫлемелӗ пулат̆. Шупашкар чӑннипех республикӑн економикӑпа куљтурӑ центрӗ пулса тӑрат̆.

Ҫак иртнӗ ҫулсем хушшинче пирӗн колхозсем организаципе хуҫалӑх йенчен ӳсее тӗрекленчӗҫ. Гектартан вӑтам шутпа ҫӗр пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илекен колхозсем ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. Чӑваш хресченӗ-колхозник пуйан та куљтурӑлӑ пурӑнма пуҫларӗ. Республикӑра 23 МТС, вӗсенче 1938 ҫ. 1136 трактӑр, 356 комбайн пулат̆. Колхоз уйхирӗсенче тулӑ акса тӑвасси тӑтӑшах ӳсе пырат̆. Ҫавӑн пекех техникӑлӑ куљтурӑсем акас йенӗпе те пысӑк утӑмсем тунӑ.

Ҫӗршыва индустриализацилени, йалхуҫалӑхне социалисӑмла ҫӗнетни—чӑваш халӑхӗн куљтурине хӑпартма пысӑк майсем туса пачӗ. Ленинла—Сталинла наци политикине ҫирӗппӗн тытса пыни формӑ йенчен вацилӗ, ӑшчикӗ йенчен социалисӑмлӑ куљтурӑна аталантарса чечеклентерчӗ.

Ҫӗршыв ӳсет, унпа пӗрле ҫынсем ӳсеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл Сталин саманинчи чи паха пайлӑсенчен пӗри. Партипе правитӗлствӑ тата Сталин йулташ тӑрӑшнипе халӑх хушшинчен ҫӗршер, пиншер талантлӑ ҫынсем общӗствӑлӑ-политикӑлӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ.

Халӗ чӑваш халӑхӗ РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленет. Хапрӑксемпе савӑтсенче, колхозсемпе совхозсенче, аслӑ шкулсенче, учреждениссенче темиҫе ҫӗршер кружоксем ӗҫлеҫҫӗ, вӗсенче Сталинла Конституципе суйлав саккунӗсене вӗренеҫҫӗ, чӑваш халӑхӗ коммуниссен партийӗ йертсе пынипе тунӑ ҫитӗнӳсемпе ҫӗнтерӳсен итогне тӑваҫҫӗ.

Ҫакӑнта пичетленекен материалсенчен пропагандиссем, агитатӑрсем, политвулавҫӑсем, суйлавҫӑсем Чӑваш республикӗн хуҫалӑхӗпе куљтурӑ ӳсӗмӗ ҫинчен калакан цифӑрсемпе тӗслӗхсем тупма пултараҫҫӗ.

Рабочисен хисепӗ

Революцичченхи вӑхӑтра хаљхи Чӑваш республикӗ йышӑнакан территорире промышлӗннӑҫ рабочисен хисепӗ пӗтӗмпе те 1563 ҫын кӑна пулнӑ. 1936 ҫултах рабочисен хисепӗ 13 пин ҫынна йахӑн пулнӑ. Халӗ ку хисеп тата чылай ӳснӗ, республикӑра ҫӗнӗ савӑтсем лартнӑ май, вӑл пӗрмайах ӳсе пырат̆.

*

Промышлӗннӑҫ продукцийӗ

Сойузлӑ предприйатисем 1936 ҫулта 44.951.800 тенкӗлӗх, 1937 ҫулта—45.287.600 тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ. 1938 ҫулта 49.363.200 тенкӗлӗх кӑлармала.

Республикӑ предприйатийӗсем 1936 ҫулта 7.997.200 тенкӗлӗх, 1937 ҫулта—8.938.200 тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ. 1938 ҫулта 11.337.700 тенкӗлӗх кӑлармала.

Райӗҫтавком промышлӗннӑҫ предприйатисем 1936 ҫ. 1.794.200 тенкӗлӗх, 1937 ҫулта 2.105.000 тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ. 1938 ҫулта 3.053.300 тенкӗлӗх кӑлармала.

Чӑваш республикӗнчи шултӑра промышлӗннӑҫ кӑларакан продукци хисепӗ 1937 ҫул тӗлне, вӑрҫӑччен хипе танлаштарсан 11,2 хут ытла ӳснӗ.

1938 ҫулта промышлӗннӑҫ строителстви ӗҫне 41.145.000 тенкӗ хывмала.

*

Транспӑрт

Чӑваш республикӗн территорийӗ урлӑ каҫса кайакан Мускав—Хусан чукунҫулӗн тӑршшӗ 296 километр. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫулӑн тӑршшӗ 101 километр пулат̆.

Халӑх хуҫалӑхӗнче шывҫул транспӑрчӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. 1936 ҫулта пӗр Шупашкар пристӑнӗ урлӑ кӑна тавар 93.409 тоннӑ турттарса кайнӑ, 95.790 тоннӑ турттарса килнӗ. Кӑҫал апрелпе май уйӑхӗсем хушшинче Шупашкар пристӑнӗ урлӑ 19.199 тоннӑ ытла тавар йанӑ, 39.840 тоннӑ турттарса килнӗ.

Революцичченхи вӑхӑтра Чӑваш ҫӗршывӗ ҫулсӑр ҫӗршыв пулнӑ. Шоҫҫе таврашӗ пулман. Ҫуркунне хипе кӗркуннехи вӑхӑтсенче ниҫта тухса кӗме пулман. Йулашки ҫулсенче Канаш—Шупашкар хушшинчи шоҫҫе ҫулне ӗҫе йанӑ. Кӑҫал Канашпа Патӑрйел хушшинчи шоҫҫе ҫулне туса пӗтереҫҫӗ. Шупашкар—Йетӗрне, Шупашкар—Тӗрлемес, Шупашкар—Вӑрмар, Шупашкар—Варнар ҫулӗсене лайӑхлатнӑ.

Рељсӑр ҫулсем тӑрӑх 1936 ҫулта—140.100 тоннӑ, 1937 ҫулта 137.400 тоннӑ груз турттарнӑ, план тӑрӑх 1938 ҫулта 147.000 тоннӑ турттармала.

Автопарк пӗрмай ӳсе вӑйланса пырат̆.

Революцичченхи вӑхӑтра Чӑваш ҫӗршывӗнче йурахлӑ ҫулсен хисепӗ аран-аран 480 километра ҫитнӗ пулсан, халӗ республикӑра лайӑхлатнӑ ҫулсем 3.334 километр ытла.

*

Вакунсемпе паравуссем

1934 ҫулта Канашра вакунсем йусакан савӑта тума тытӑннӑ. Ку савӑт республикӑри пысӑк савӑтсенчен пӗри. Иртнӗ ҫулта савӑт 811 вакун йусанӑ, вӑтам ремонтран 642 вакун кӑларнӑ.

Улатӑрти паравуссем йусакан савӑт 1936 ҫулта 172 паравус, 1937 ҫулта 162 паравус йусаса кӑларнӑ. Ку савӑта кӑҫал чылай аслӑлатса пысӑклатма палӑртнӑ.

*

Фосфорит

Сталинла пилӗкҫуллӑхсенче ҫӗр айӗнче выртакан пуйанлӑхсемпе пысӑккӑн усӑ курма тытӑннӑ. Йапар фосфорит икекӗсӗ ҫинче Вӑрнар фосфорит савӑтне туса лартнӑ. Вӑл 1936 ҫулта йалхуҫалӑхне 24.015 тоннӑ фосфорит ҫӑнӑхӗ панӑ, 1937 ҫулта—30.489 тоннӑ, 1938 ҫулӑн малтанхи 4 уйӑхӗ хушшинче 9.528 тоннӑ. План тӑрӑх 1938 ҫулта савӑтӑн 34.000 тоннӑ фосфорит ҫӑнӑхӗ кӑлармалӗ.

Електроенерги

Республикӑри пур хуласене, район тата промышлӗннӑҫ центрӗсене, ҫавӑн пекех тата малта пыракан колхозсене електрофикациленӗ. Хаљхи вӑхӑтра Чӑваш республикӗнчи чи пысӑк електростанцине тӑваҫҫӗ. Вӑл Канашри вакунсем йусакан савӑтра пулат̆. Унсӑр пуҫне 3 ҫӗрте (Ҫӗрпӳ, Именкасси, Куснар) гитроелектростанцисем лартаҫҫӗ.

Республикӑри електростанцисем 1936 ҫулта електроенерги 3020 киловат сехет панӑ пулсан, 1938 ҫулта 5.960 киловат сехет памала.

*

Екстракт

Ҫӗмӗрлери екстракт тӑвакан „Бољшевик" савӑт Чӑваш республикӗнче сталинла малтанхи пилӗкҫуллӑхра туса лартнӑ пирвайхи савӑтсенчен пӗри. Вӑл 1936 ҫулта 3283 тоннӑ екстракт, 1937 ҫулта 3638 тоннӑ, 1938 ҫулӑн малтанхи пилӗк уйӑхӗнче 1611 тоннӑ екстракт туса кӑларнӑ.

Екстракт халӑх хуҫалӑхӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Малтанхи пилӗкҫуллӑхра туса лартнӑ екстракт савӑчӗсем Совет Сойузне йут ҫӗршывсенчен екстракт кӳрсе килессинчен йалтах хӑтарчӗҫ.

*

Кирпӗч

Ҫӗнӗ стройкӑсене кирлӗ материалсенчен пӗри вӑл—кирпӗч. Йулашки ҫулсем хушшинче Иванӑвара, Шупашкарта, Ӗнешпуҫӗнче кирпӗч савӑчӗсем туса лартнӑ. Тата ҫӗнӗрен чылай ҫӗрте туса пӗтермеле.

Вырӑнти промышлӗннӑҫ, районти промышлӗннӑҫ тата промысла коопераци йенӗпе ӗҫлекен кирпӗч савӑчӗсенче 1936 ҫулта 16.163.800 кирпӗч, 1937 ҫулта 18.655.000 кирпӗч туса кӑларнӑ, 1938 ҫулта 25.800.000 кирпӗч туса кӑлармала.

*

Аласталӑх промышлӗннӑҫӗ

Ҫултан ҫул ӳсет аласталӑх промышлӗннӑҫӗ. 1937 ҫулта Промсойуз пӗрлештерсе тӑракан ертелсемпе предприйатисем 26.180 пин тенкӗлӗх, Вӑрманпромсойуз йенӗпе 17.555 пин тенкӗлӗх, Коопинсойуз йенӗпе 2.201 пин тенкӗлӗх, Куљпромсойуз йенӗпе 7.591 пин тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ.

Промысла кооперацийӗ иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхӑн пуҫламӗшӗнче 20 мӗлйун тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ пулсан, 1937 ҫулта пӗтӗмпе 53.717 пин тенкӗлӗх кӑларнӑ, ӳсӗм 2 хут ытларах. Промысла коопераци кӑларакан продукци хисепӗ республикӑри пӗтӗм промышлӗннӑҫ продукци хисепӗнче 50 проц. ытла йышӑнат̆. Иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхӑн пуҫламӗшӗнче аласталӑх ертелӗсенче 16.251 ҫын пӗрлешсе тӑнӑ пулсан, 1937 ҫулта ку хисеп 28.783 ҫынна ҫитнӗ.

*

Тумтир

Промсойуз ҫиҫтемине кӗрекен артелсем 1937 ҫулта тумтирсем, кӗпе-йӗмсем 5.172 пин тенкӗлӗх; чулхасем, носкисем, майкӑсем—3.770 пин тенкӗлӗх; картуссем, ҫӗлӗксем—1.554 пин тенкӗлӗх, тӗрленӗ кӗпесем, скатертсем—1.300 пин тенкӗлӗх кӑларнӑ.

1938 ҫулта ҫӗленӗ тумтирсемпе кӗпе-йӗмсем 6.449 пин тенкӗлӗх кӑлармала.

*

Атӑ-пушмак

Шупашкарти тир савӑтӗнче 1932 ҫулччен 50 ҫын ҫеҫ ӗҫленӗ, халӗ унта 155 ҫын ӗҫлет. 1936 ҫулта атӑ-пушмак 80.000 тенкӗлӗх, 1937 ҫулта 100.000 тенкӗлӗх туса кӑларнӑ, 1938 ҫулта 120.000 тенкӗлӗх туса кӑлармала.

*

Ҫӑматӑ

Ӗлӗк Чӑваш республикинче ҫӑматӑ тӑвас ӗҫ уйрӑм аластаҫсен аллинче пулнӑ. Вӗсем ҫӑматӑсене мунчасенче, хура пӳртсенче тунӑ. Пӗррӗмӗшпе иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхсенче ҫӑматӑ тӑвас ӗҫе чылай механизациленӗ. Деткомиссӗ мастерскойӗсем 1936 ҫулта 86.000 тенкӗлӗх, 1937 ҫулта 124 пин тенкӗлӗх ҫӑматӑ туса кӑларнӑ. 1938 ҫулта 164.000 тенкӗлӗх туса кӑлармала.

Колхозсенче 75,8 процент хресчен хуҫалӑхӗсем пӗрлешсе тӑраҫҫӗ

Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе пирӗн ҫӗршывӑн йалхуҫалӑхӗнче ӗлӗкхи вуншар мӗлйун вак хресчен хуҫалӑхӗсем вырӑнне социалисӑмлӑ шултра хуҫалӑхсем—пиншер колхозсем ӳсрӗҫ. Вӗсем—колхозсем, помещиксемпе кулаксен пусмӑрӗнчен ирӗке тухнӑ ӗҫхресченӗсенчен пӗрлешсе тӑракан хуҫалӑхсем, трактӑрсемпе, комбайнсемпе тата ытти машинӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ хуҫалӑхсем ҫултан ҫул ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ.

1928 ҫулта Чӑваш республикӗнче пурӗ ҫӗр колхоз ытларах пулнӑ пулсан, 1934 ҫулти йанварӗн 1-мӗшне 1720 колхоз, вӗсенче 84.210 хресчен хуҫалӑхӗ пулнӑ. 1938 ҫулти йанварӗн 1-мӗшне республикӑра пурӗ 1688 колхоз шутланат̆, вӗсенче 149.668 хуҫалӑх тӑрат̆ йе республикӑри хресчен хуҫалӑхӗсенчен 75,8 процент.

Йалхуҫалӑх ертелӗн сталинла уставӗ колхозсене организаципе хуҫалӑх йенчен ҫирӗплетессинче тата колхозниксене пуйан та куљтурӑлӑ пурӑнакан тӑвассинче пит пысӑк вырӑнта тӑрат̆. Колхозсене республикипе пурӗ 990 пин гектар ӗмӗрлӗхе усӑ курма ҫӗр ҫирӗплетсе панӑ. Сталинла ҫӗнӗ устав йышӑннӑ хыҫҫӑн колхозниксем вӑйлӑ тырпулшӑн пит пысӑк ҫӗкленӳпе кӗрешме тытӑнчӗҫ. Сталинла 7—8 мӗлйард пӑт тырӑшӑн кӗрешсе, агротехникӑла ӗҫсене массӑллӑн пурнӑҫласа пырса, колхозсем иртнӗ ҫулта вӑтам шутпа гектартан 97-шер пӑт тырӑ туса илсе, ӗҫкунӗ пуҫне вӑтам шутпа 15-шер кӗренке тӗштырӑ валеҫрӗҫ.

Совет стройӗ хресченсене пуйан та куљтурӑлӑ пурӑнӑҫ пачӗ.

1935 ҫулта пӗр ҫын пуҫне 66,3 тенкӗлӗх тавар сутнӑ пулсан, 1937 ҫулта 152,9 тенкӗлӗх, йе 2,3 хут ытларах сутнӑ.

Йалхуҫалӑха механизациленни

Чӑваш республикинчи колхозсен уй-хирӗнче хаљ 23 машинӑ-трактӑрлӑ станци пин трактӑрпа ӗҫлесе тӑрат̆. Колхозсен аллинчи ҫӗр лаптӑкӗнчен 90 процентне трактӑрсем ӗҫлесе тӑраҫҫӗ, 50 процент ытларах машинӑсемпе акнат̆. 1938 ҫулта пурӗ 356 комбайн ӗҫлемеле пулат̆.

Аслӑ Октӑбӗр революцийӗччен плуг тытса курман чӑваш хресченӗ 1932 ҫулта сухапуҫҫене пӗтӗмпех уйран хӑваласа йачӗ. Колхозсен аллинче хаљ 3600 ҫейалкӑ, 3900 жнейкӑ, утӑ ҫулмалли 1405 машинӑ, 2665 молотилкӑ ӗҫлет. 900 таран груз турттармалли автомашинӑсем колхозсем аллинче колхозсен тӗрлӗрен хуҫалӑх ӗҫӗсене туса тӑраҫҫӗ.

Октӑбӗр революцийӗ 20 ҫул тултарнӑ тӗле республикипе 60 колхоз електрофикациленнӗ. Вӗсенчен 20 колхозра авӑн ҫапас ӗҫсене електрицӑ вӑйӗпе туса иртернӗ.

*

Социалисӑмла выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ

1934 ҫулти йанварӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 1938 ҫулти йанварӗн 1-мӗшне ҫитиччен, 4 ҫул хушшинче колхозсенче, колхозниксен тата йединоличниксен хуҫалӑхӗсенче выљӑх-чӗрлӗхсен хисепӗ ҫакӑн чухлӗ хутшӑннӑ:

Лашасем—	3,200 пуҫ,
Ӗне выљӑхӗ—	44.460—"—
Сурӑхсем	—15.760—„—
Сыснасем	—76.150—„—

1688 колхоз пурӗ 1773 выљӑх-чӗрлӗх ферми тытса тӑрат̆. 1934 ҫулта ӗне ферми пуҫне вӑтам шутпа 19,6 пуҫ ӗне выљӑхӗ пулнӑ пулсан, хаљ 44,5 пуҫ шутланат̆; сысна ферминче 39,7 сысна пулнӑ пулсан, хаљ 94,2 сысна; сурӑх ферминче 28 сурӑх вырӑнне хаљ 111 сурӑх шутланат̆.

Пирӗн ҫӗршывра социалисӑмлӑ йӗркепе выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ анлӑн сарӑлса пыма кирлӗ условисене пурне те туса пана. Империалисӑмлӑ вӑрҫӑччен, 1913 ҫулта ӗне выљӑхӗ пурӗ 199.187 пуҫ пулнӑ пулсан, 1937 ҫулта 232.902 пуҫа ҫитнӗ, сыснасен хисепӗ 90.605 пуҫран 179.474 пуҫа ҫитнӗ (ӳсӗм икӗ хута йахӑн), сурӑхсем—505.881 пуҫран 562.161 пуҫа ҫитнӗ.

1938 ҫул хушшинче ӗнесӗр колхозниксене пурне те ӗне выљӑхӗ усракан туса ҫитерме палӑртнӑ. Партипе правитӗлствӑ ӗнесӗр колхозниксене ӗне усракан тӑвас тӗлӗшпе пысӑк пулӑшу парса тӑрат̆.

Суту-илӳ

Партипе Совет правитӗлстви суту-илӳ ӗҫне вӑйлатасси ҫине хытӑ пӑхаҫҫӗ. Иккӗмӗш пилӗкҫуллӑх хушшинче Чӑваш республикӗнче таварҫаврӑнӑшӗ (ваккӑн) 2,7 хут ӳснӗ. 1934 ҫулта таварҫаврӑнӑшӗ 101,9 мелйун тенкӗлӗх пулнӑ пулсан, 1937 ҫулта 274,7 мӗлйун тенкӗлӗх пулнӑ. 1937 ҫулта сахӑр 1934 ҫулта сутнинчен 5 хут ытларах, кондитӗр изделисем—2,6 хут ытларах, ҫакӑр—4 хут ытларах сутнӑ. Потребкоопераци колхозсемпе колхозниксене 11697 сехет, 598 велосипед, 674 патефон, 100.000 патефон пластинки, 1505 радиоприйомник, 565.000 тенкӗлӗх музыкӑ инструменчӗсем, 587.000 тенкӗлӗх спортинвентар сутнӑ. 1937 ҫулта ҫӗнӗрен 39 магазинсемпе лавкасем, 144 палаткӑ, ларйок, киоскӑ уҫнӑ. Йалсенче хулари пек магазинсем тӑваҫҫӗ. Ҫавӑн пек магазинсем йалсенче 47, район центрӗсенче 113 уҫнӑ.

Сывлӑха сыхлас ӗҫ

Совет Сойузӗ—ӗҫсыннисен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшакан тӗнчери пӗртен пӗр государствӑ. Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫӗ совет государстви ҫулран ҫул нумай укҫа-тенкӗ хыват̆. Совет влаҫӗ чӑваш халӑхӗн сывлӑхне сыхлас йенӗпе нумай ӗҫсем турӗ. Революцичченхи Чӑваш республик территоринче пурӗ те 19 пуљницӑ (вӗсенче 476 вырӑн пулнӑ) тата 14 фељдшӗр пунктчӗ кӑна пулнӑ пулсан, халӗ пирӗн республикӑра 49 пуљницӑ (2073 вырӑн), фељдшӗр пункчӗсем 97, акушеркӑ пунктчӗсем 60, ача ҫуратмалли ҫуртсем 75, трахпунктсем 685, ача сачӗсем 60, йаслӗсем 70 шутланаҫҫӗ. Чӑваш республикӗн 3 санатори, 3 канмалли ҫурт, трахом институчӗ пур. Партипе правитӗлствӑ халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫе иртнӗ ҫулта 18.341.400 тенкӗ расхутланӑ.

*

Трахом пӗтет

Чӑваш халӑхӗн ӗмӗрхи инкекӗ—трахом пӗтсе пырат̆. Ӗлӗк патша саманинче, Ҫӗрпӳ уйесӗнчи халӑх хушшинче трахомлисем 39 процент, Шупашкар уйесӗнче 56 процент пулнӑ. 1935 ҫулта диспансеризаци тунӑ хыҫҫӑн трахомлисем Чӑваш республикӗнче 145 пин ҫын (17,1 процент) пулни палӑрнӑ. Халӗ трахомлисем 9 процент ҫеҫ йулнӑ.

*

Шкулсем

Патша саманинче Чӑваш ҫӗршывӗ чи тӗттӗм кӗтессенчен пӗри пулнӑ. Ӗҫсыннисем хушшинче хут пачах пӗлменнисем 82 процент шутланнӑ.

Хаљхи вӑхӑтра Чӑваш республикӗ, пӗтӗм Совет Сойузӗпе пӗрлех, мӗн пур ҫамрӑксене обйазателлӑ йӗркепе ҫичӗ ҫул вӗрентес задачӑна анӑҫлӑн пурнӑҫласа пырат̆. Республикӑ пӗтӗм халӑх хут пӗлекен ҫӗршыв пулса тӑчӗ.

1913 ҫулта чӑваш ҫӗршывӗн территоринче пуҫламӗш тата вӑтам шкулсем 463 пулнӑ пулсан, халӗ пирӗн республикӑра 1038 шкул шутланат̆.

Революцичченхи чӑваш ҫӗршыв территорине кӗрекен шкулсенче 29,6 пин ҫын вӗреннӗ, халӗ республикӑра 176,6 пин ҫын вӗренет.

Патша саманинче чӑваш халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем аслӑ шкулсенче вӗренесси ҫинчен ӗмӗтленме те пултараймаи. Хаљхи вӑхӑтра пирӗн республикӑра 4 аслӑ шкул ӗҫлет: учителсен тата педагогикӑ институчӗ, йалхуҫалӑх институчӗ, йалхуҫалӑхӗн коммунисла аслӑ шкулӗ. Пирӗн республикӑри аслӑ шкулсенче пӗтӗмпе 1086 ҫын вӗренет, вӗсенчен 79 процентӗ чӑвашсем.

Аслӑ шкулсемсӗр пуҫне пирӗн тӗрлӗрен специалиссем хатӗрлекен вӑтам шкулсем 27 пур, вӗсенчен—8 недучилищӑ, 8 техникум, 5 рабфак тата ыт. те. Ҫав шкулсенче халӗ 8300 ҫын вӗренет.

Республикӑри пур шкулсенче те вырӑс чӗлхине йуратса тимлӗн вӗренеҫҫӗ. Патша саманинче чӑваш халӑхӗн тӑван чӗлхине, тӑван куљтурине таптаса пынӑ. Халӗ пирӗн республикӑра чӑваш шкулӗсенче пур предметсемпе те тӑван чӗлхепе вӗрентеҫҫӗ.

Чӑваш ӗҫҫамрӑкӗсем ваљли республикӑ тулашӗнчи аслӑ шкулсен алӑкӗсем те уҫӑ. Мускаври, Ленинградри, Горькинчи, Хусанти тата ытти хуласенчи аслӑ шкулсенче темиҫе ҫӗршер чӑваш ӗҫҫамрӑкӗ вӗренет. Нацилӗ кадрсем пур йенӗпе те йышлӑн ӳсе пыраҫҫӗ.

Театрсем, клубсем, киносем

Ҫултан ҫул республикӑра куљтурӑ учреждениссем йышланса пыраҫҫӗ. Ӗҫ кунӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн ӗҫсыннисем вӑл учреждениссенче канаҫҫӗ, тӗрлӗрен кружоксенче вӗренеҫҫӗ. Республикӑра академи театрӗ, филармони, халӑх пултарулӑх ҫурчӗ, колхоз театрӗсем 5, кинотеатрсемпе киноустановкӑсем 108 (вӗсенчен саслӑ кинотеатрсем 18), социалисӑмла куљтурӑ ҫурчӗсем 23, колхоз клубӗсем 203, вулав ҫурчӗсем 574, хӗрлӗ кӗтессем 1000 ытла, районти библиотекӑсем 25, йалти библиотекӑсем 28 пур.

*

Хаҫат-журналсем

Чӑваш халӑхӑн куљтурӑ ӳсӗмӗ уйрӑмӑнах пичет ӳсе пынинче лайӑх курӑнат̆. Октӑбӗр революцичченхи Чӑваш республикӗн территоринче нимӗнле хаҫат та пулман. Халӗ республикӑра пӗтӗмпе 36 хаҫат тухса тӑрат̆. Вӗсенчен: Шупашкарта—4, районсенче—25, хапрӑк-савӑтсенче—5, колхозсенче—2. Вӗсен ҫулталӑкри тиражӗ—25 мӗлйун екземпљартан иртет.

1937 ҫулта стена хаҫачӗсем 3.600 ытла пулнӑ. Кашни хапрӑкра, савӑтра, учреждени́ре, шкулта стена хаҫачӗ тухат̆. Пирӗн хаҫатсем хӑйсем тавра вуншар пин ӗҫйалкорсене пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Ӗлӗк „чӑваш кӗнекине ӗне ҫинӗ",—тенӗ. Халӗ кӗнеке кӑларас ӗҫ ҫултан ҫул ӳсе пырат̆. 1936 ҫулта Чӑвашиздат 119 кӗнеке кӑларнӑ, кӑҫал 215 кӗнеке кӑлармала, вӗсен тиражӗ 2 мӗлйун екземпљара йахӑн пулат̆.

Чӑваш халӑхӗ марксисӑм-ленинисӑм классикӗсене тӑван чӗлхепе вулат̆, вырӑс писателӗсемпе тӗнчери аслӑ писателсен произведенисене вӗренет.

*

Ҫыхӑну

Ҫыхӑну—вӑл ӗҫхалӑхне куљтурӑпа общӗствӑлӑ пурнӑҫа хутшӑнтармалли вӑйлӑ майсенчен пӗри. Ҫыхӑну органӗсене социалисӑмлӑ промышлӗннӑҫ вӑйлӑ техникӑ пачӗ. 1937 ҫулта автомашинӑсемпе почтӑ ҫӳретмелли ҫул 754 километр тӑршшӗ пулнӑ. 1938 ҫулта вӑл 779,6 километра ҫитмеле. Вуншар автомашинӑ почтӑна чи айакри районсене кӗске вӑхӑтра илсе ҫитерет.

Телефон ҫыхӑнӑвӗ хӑвӑрт ӳсет. Революцичченхи йалсенче телефон пулман. Халӗ пирӗн пур районсем те республикӑн тӗп хулипе—Шупашкарпа телефонпа ҫыхӑннӑ. 1936 ҫулта пирӗн республикӑра 1648 телефон пулнӑ, 1938 ҫулта 2219 телефон пулмала.

1936 ҫулта 432 йалсоветра телефон пулнӑ. 1938 ҫулта 626 пулмала. Шупашкар хулинче полуавтомат телефонсем ӗҫлеҫҫӗ.

*

Радио

Йулашки ҫулсенче радио республикӑн пур кӗтесӗсене те кӗнӗ. 1937 ҫулта пирӗн 23 радиоузӗл пулнӑ. Кӑҫал 26 радиоузӗл пулат̆. Ҫӗнӗрен радиоузелсем Трак, Тавай, Кувакинӑ районӗсенче пулаҫҫӗ.

1937 ҫулта пирӗн республикӑра 8500 радиоточкӑ пулнӑ. Кӑҫал 12000 радиоточкӑ пулмала, вӑл шутран йалсенче — 3840 радиоточкӑ.

Ӑмӑртса ӗҫлениле

Чурачӑкри промысла ертелӗнчи (Ишлей р.) стаханӑвӗц-чӑптаҫӑ Алмазӑв й-ш кӑҫалхи ҫул Чарпуҫӗнчи (Шӑхасан р.) аласта ертелӗнчи стаханӑвӗцпа—Артемйӗв йулташпе ӑмӑртӑва тухрӗ.

Ӑмӑрту договӑрӗ тӑрӑх ҫулталӑк хушшинче Алмазӑв йулташ 4250 штук, Артемйӗв йулташ 4100 шт. чӑпта ҫапма пулчӗҫ.

Тата Артемйӗв йулташ ийунӗн 26-мӗш тӗлне хут вӗренме пулчӗ.

Вӗсем хӑйсем ҫине илнӗ обйазателствӑсене анӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Артемйӗв йулташ ийунӗн 10-мӗшне 1891 штук чӑпта ҫапрӗ, вӗренчӗ.

Алмазӑв йулташ та Артемйӗв йулташран йулмаст̆. Вӑл нормӑна 150 процент тултарса пырат̆, пайанхи куна 3000 штука йахӑн чӑпта ҫапрӗ.

Артемйӗвпа Алмазӑв йулташсем пӗр чӑпта та иккӗмӗш йе виҫҫӗмӗш сурт ҫапмаҫҫӗ, — пӗтӗмпех пӗррӗмӗш сурт. Май уйӑхӗнче Чӑвашкуљпромсойуз Артемйӗв йулташа преми пачӗ.

Н. М. Йашков.

1938 ҫулти вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государствӑ планӗ ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулта вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государствӑ планне ҫинчен постановлени йышӑнчӗ. Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен совхозсем ҫирӗпленнӗ май, колхозлӑ фермӑсем организациленнӗ тата колхозсемпе колхозниксене государствӑ пысӑк пулӑшусем панӑ май йулашки ҫулсенче вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре чылай ҫитӗнӳсем тунине палӑртнӑ. 1934 ҫулпа 1938 ҫул хушшинче майракалӑ шултӑра вылђӑхсен хисепӗ ҫӗршывра 52 процент ӳснӗ, сурӑхсемпе качакасен хисепӗ—82 процент, сыснасен хисепӗ—123 процент ӳснӗ.

Колхозсенчи таварлӑ вылђӑх-чӗрлӗх фермисенче вылђӑхсен хисепӗ 1934 ҫулпа 1938 ҫул хушшинче 136.200 пуҫран 374.600 пуҫа ҫити ӳснӗ. Ҫак ҫулсенче колхозсенчи вылђӑх-чӗрлӗх хисепӗ ҫакӑн чухлӗ ӳснӗ: майракалӑ шултӑра вылђӑхсем тӑрӑх 77 процент, сурӑхсемпе качакасем тӑрӑх—123 процент тата сыснасем тӑрӑх—126 процент.

Ҫакӑнпа пӗрлех тата вылђӑхсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе те пысӑк ӗҫ туса иртернӗ. 1937 ҫулта колхозсенче ӗнесене 82 процент ӑратлӑ тата ӑратлантнӑ вӑкӑрсемпе чуптарнӑ, сурӑхсемпе качакасене 85 процент ӑратлӑ тата ӑратлантнӑ такасемпе чуптарнӑ, сыснасене 91 процент ӑратлӑ тата ӑратлантнӑ аҫасемпе чуптарнӑ.

Колхозсенче тата колхозниксен килӗнчи вылђӑх-чӗрлӗх шутне ӳстересси вылђӑхсен пахалӑхне лайӑхлатас ҫӗрте вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен совхозсем пысӑк вырӑн йышӑннӑ, вӗсем 1934 ҫулпа 1938 ҫул хушшинче колхозсене колхозниксене ђӳтӑлӑ хаксемпе ӗнесемпе пӑрусем 1 мӗлйун та 285 пин пуҫ сутнӑ, сыснасемпе сысна ҫурисене 1 мӗлйун та 722 пин пуҫ, сурӑхсемпе вӗсен путекисене 3 мӗлйун та 240 пин пуҫ сутнӑ.

Хӑйсен килӗсенче усрама вылђӑхсем туйантарма колхозниксене колхозсенчи таварлӑ вылђӑх-чӗрлӗх фермисем пысӑккӑн пулӑшнӑ. 1934 ҫулпа 1938 ҫул хушшинче ҫав фермӑсем колхозниксене 1 мӗлйун та 445 пин пӑру, 15 мӗлйун та 270 пин сысна ҫури тата сурӑхсемпе вӗсен путекисене 4 мӗлйун та 433 пин пуҫ сутнӑ. Кунсӑр пуҫне, государствӑ кивҫен парса пулӑшнипе тата йатарласа ђӳтӑлӑ хаксемпе парса пулӑшнипе, ӗнесӗр колхозниксем контрактаци тӑрӑх 3 мӗлйун та 373 пин пӑру туйаннӑ.

Партипе правительствӑ колхозниксене хӑйсене усӑ курма ӗнесем туйанас ҫӗрте пысӑккӑн пулӑшнине тӗпрен илсен, пур колхозниксене те ӗне усракан тунӑ.

Вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫӗршывра ҫирӗппӗн тата ӳсӗмлӗн пулса пынине палӑртса, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ҫакна палӑртнӑ: ССР Союзӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, ССР Союзӗн Совхозсен Халӑх Комиссариачӗ тата вырӑнсенчи партипе совет организацийӗсенчен чылайӑшӗсем ҫитӗнӗксӗр ӗҫлесе пынипе, ҫавӑн пекех халӑх тӑшманӗсен сӑтарлӑ ӗҫне пула, партипе правительствӑн чылай хушӑвӗсене пурнӑҫа кӗртмен: нумай колхозсенче вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен фермӑсем халӗ те ҫук-ха, вылђӑхсене ӑратлатас ӗҫе халӗ те йӗркелесе йаман, вылђӑх апачӗ хатӗрлесси вылђӑхсем ӳссе пынинчен йулса пырать; лашасем ӗрчетес ӗҫе ҫитӗлӗклӗ туса пымаҫҫӗ; вылђӑхсене ветеринарипе зоотехникӑ йенчен пӑхас ӗҫе начар организациленӗ.

Чылай республикӑсенчи, крайсемпе облӑҫсенчи колхозсенче вылђӑхсен хисепӗ чакни тата ҫамрӑк вылђӑхсем вилни палӑрать. 1937 ҫул хушшинче Ҫвердлӑвск облӑҫӗнче колхозсенче лашасен хисепӗ 8 процент чакнӑ, майракалӑ шултӑра вылђӑхсен хисепӗ—13 процент чакнӑ, ҫамрӑк пӑрусем вилни 21 процент пулнӑ; Башкир АСС Республикинче лашасен хисепӗ 5 процент чакнӑ, ҫамрӑк пӑрусем вилни 21 процент пулнӑ; Тутар АСС Республикинче лашасен хисепӗ 10 процент чакнӑ, майракалӑ шултӑра вылђӑхсен хисепӗ—11 процент чакнӑ, ҫамрӑк пӑрусем вилни 27 процент пулнӑ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла шутлать: вылђӑх-чӗрлӗх хисепӗ ӳссе пынипе пӗрлех, вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри тӗп задачӑ хађхи вӑхӑтра вылђӑхсене ӑратлантарса, вӗсен тухӑҫлӑхне ӳстерессӗ, вылђӑх апачӗсен базине ҫирӗплетесси тата вылђӑхсене ветеринарипе зоотехникӑ йенчен пӑхас ӗҫе тӗрӗс организацилесси пулать.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ колхозсенчи вылђӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстермелли плана ҫирӗплетнӗ, ҫав план тӑрӑх 1939 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне вылђӑхсен хисепне уйрӑмӑн илсен ҫакӑн чухлӗ ӳстермеле: лашасене 13.352 пин пуҫа ҫити, вӑл 1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне пулнӑ вылђӑхсен хисепӗ ҫумне хушса шутласан—107 процент пулать, майракала шултӑра вылђӑхсене—16.281 пин пуҫа ҫити—1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне пулнӑ вылђӑхсен хисепӗ ҫумне хушсан—110 процент шутланать (вӑл шутра ӗнесем—4.889 пин пуҫ—116 процент, кӳлсе ҫӳремели вӑкӑрсем—3.044 пин пуҫ—112 процент), сурӑхсене—25.202 пин пуҫа ҫити—117 процент, качакасене—1.372 пин пуҫа ҫити—116 процент, сыснасене—7.430 пин пуҫа ҫити—119 процент.

1938 ҫулта ҫамрӑк вылђӑхсене ҫакӑн чухлӗ пӑхса ӳстермеле: тыхасем колхозсенче 1.740 пин пуҫа ҫити, пӑрусем колхозсенче—4.042 пин пуҫа ҫити, колхозниксем хӑйсен килӗсенче усракан пӑрусем—8.148 пин пуҫа ҫити, путексем колхозсенче—8.826 пин пуҫ, колхозниксенне—12.747 пин пуҫа ҫити, качака путекисем колхозсенче—540 пин пуҫа ҫити, колхозниксенне—2.711 пин пуҫа ҫити, сыснасем колхозсенче—5.805 пин пуҫа, колхозниксенне—14.080 пин пуҫа ҫити пӑхса ӳстермеле.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн, Апат-ҫимӗҫ промышлӗннӑҫ Халӑх Комиссариачӗн, Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем тӑрӑх, хула ҫывӑхӗнчи трестсем тата государствӑн тата кооперацин ытти хуҫалӑхӗсем тӑрӑх та вылђӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстермели план ҫирӗплетнӗ.

Колхозниксенчен майракалӑ шултӑра вылђӑхсем сутӑн илмели тата вӗсемпе контрактаци тумали плана ҫирӗплетнӗ: 520 пин пӑру—колхозсенчи ҫӗнӗрен тӑвакан вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетекан фермӑсем вађђи тата пӗчӗкрех фермӑсене ҫирӗплетме, 306 пин вӑкӑр—колхозсенче кӳлсе ҫӳрекен вӑкӑрсен хисепне ӳстермешкӗн.

1938 ҫулта колхозниксене колхозсенчи таварлӑ фермӑсенчен ӗнесӗр колхозниксем пур районсем тӑрӑх ҫамрӑк пӑрусем сутмали плана 256.000 пуҫ таран палӑртса ҫирӗплетнӗ тата вӗсем вађђи колхозниксенчен пӑрусем сутӑн илмели тата контрактаци тумали плана 884 пин пуҫ таран ҫирӗплетнӗ, ҫавӑн пекех 1938 ҫулта колхозсенчи таварлӑ фермӑсенчен колхозниксене сысна ҫурисем тата сурӑх путекисемпе качака путекисем сутмали плана ҫирӗплетнӗ. Вӑл план тӑрӑх 5.430 пин пуҫ—сысна ҫурисем, 1 мӗлйун та 607 пин пуҫ—сурӑх путекисемпе качака путекисем сутмала тата контрактаци тумала.

План тӑрӑх колхозсенче тата колхозниксем усракан вылђӑхсене ӑратлӑ аҫасемпе чуптарса метизаци тумала: ӗнесем—17.797 пин пуҫ, сурӑхсем—25.348 пин пуҫ, качакасем—417.000 пуҫ тата сыснасем 5.217 пин пуҫ.

1938 ҫул вађђи туса хатӗрленӗ план тӑрӑх колхозсене колхозсенчи ӑратлӑ вылђӑхсем ӗрчетекен фермӑсенчен государствӑ хакӗпе ӑратлӑ тыхасем 9.600 пин пуҫ сутмала тата ССР Союзӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн лашасем ӗрчетекен совхозӗсенчен—4.800 тыха, Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсене ССР Союзӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн лашасем ӗрчетекен совхозӗсенчен—600 пуҫ тыха сутмала.

Колхозсене государствӑ хакӗпе совхозсенчен, колхозсенчи ӑратлӑ вылђӑхсем ӗрчетекен фермӑсенчен ӑратлӑ вӑкӑрсемпе пӑрусем, такасемпе путек-сурӑхсем, сысна аҫисемпе сысна амисем сутмали тата колхозниксенчен сутӑн илмели план туса ҫирӗплетнӗ.

Совхозсене аш-какай вађђи пама палӑртнӑ ҫамрӑк метис ама вылђӑх-чӗрлӗхсене колхозсемпе колхозниксене сутма ирӗк панӑ, ун пек чухне вӗсем сутӑн илнӗ вылђӑхсемшӗн килограм пуҫне килограм аш-какай государствӑна, совхозӑн планне тултарма, памала.

Вылђӑх чӗрлӗхсен мӑнтӑрӑшне государствӑ поставкӑ тӑрӑх илекен аш-какайшӑн тӳлекен хакпа расчот тумала.

Колхозсене вађђи ӑратлӑ вӑкӑрсем туйанмали ђготӑлӑ условисене тунӑ.

План тӑрӑх 1938 ҫулта колхозсенче 12 мӗлйунта 500 пин тоннӑ ҫилос хывмала.

Вылђӑхсене ветеринарипе зоотехникӑ йенчен пӑхас ӗҫе лайӑхлатас шутпа 1938 ҫулта зоотехникӑлӑ участкӑсен пӗтӗмӗшлӗ хисепне 11.720 ҫити ӳстерме йышӑннӑ, ветеринари участкисене—6.820 ҫити ӳстермеле, ветеринарипе фелђшер пункчӗсене—11.050 ҫити, районсенчи ветеринарипе бактериологи лабораторийӗсене—520 ҫити ӳстерме йышӑннӑ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ вырӑнти организацисене вылђӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели государствӑ планне колхозсене ҫитернӗ чухне кашни колхозӑн хӑйне майлӑ уйрӑмлӑхӗсене тӗплӗн шута илме тата колхозсем паракан сӗнӳсене тӗплӗн шутӑ илме кирли ҫинчен асӑрхаттарнӑ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Райком инструкторӗ

Трак районӗнчи парторганизацин иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗнче райком инструкторӗсем пуҫламӗш организацисемпе пӗчченнӗ коммунистсене начар пулӑшни ҫине хыттӑн кӑтартнӑ. Отчотпа суйлав пухӑвӗ хыҫҫӑн райком инструкторӗсем пуҫламӗш организацисемпе тачӑрах ҫыхӑнса ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Ака илепӗр райком инструкторӗ Катков йулташа. Вӑл апрел уйӑхӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ. Унтанпа вӑл пур коммунистсем патӗнче те пулнӑ. Кандидатра тӑракан Оҫипӑв йулташа парти членне куҫма пулӑшнӑ, халђ Оҫипӑв парти членӗ.

Катков йулташ малта пыракан комсомолецсене партине кӗме пулӑшать, парти уставӗпе тата программипе паллаштарать. Вӑл „Блюхер" йачӗпе тӑракан колхоз ҫумӗнчи комсомолӑн пуҫламӑш организаци комсоргне—Алексейӗв йулташа партине илме хатӗрленӗ.

Коммунисткӑ Соснова йулташ ача пӑхнипе ӗҫлеме пултараймасть. Катков йулташ ун патне киле кайса калаҫусем туса иртерет.

Катков йулташ агитаторсене лайӑх пулӑшать. Ун ҫумне ҫирӗплетнӗ йалсенче суйлав саккунӗсене вӗренме 55 кружок организациленӗ. Вӗсенче 2437 суйлавҫӑ вӗренет. Суйлавҫӑсем хушшинче 91 агитатор, 120 вулавҫӑ ӗҫлеҫҫӗ. Агитаторсем пӗлмен ыйтусене Катков йулташ патне пырса ыйтаҫҫӗ. Вӑл пур ыйтусем тӑрӑх та хӑй пӗлнӗ таран ӑнлантарма тӑрӑшать.

Катков йулташ отчотне итлеме райком планне кӗртнӗ. Ҫавӑн пекех райком инструкторсен пӗлӳне хӑпартма уйӑхра виҫӗ кун уйӑрса ӗҫрен хӑтарса вӗренме пулӑшать. Инструкторсене райком секретарӗ Свешникӑв йулташ час-часах хӑй патне чӗнсе инструкторсем умӗнче тӑракан ӗҫсем ҫинчен канашлать, ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшать.

Иртнӗ вӑхӑтсенче райком инструкторӗсене час-часах райкомпа райӗҫтӑвком уполномоченнӑйӗсем вырӑнне хурса ӗҫлеттерни нумай пулнӑ пулсан, халђ инструкторсем пуҫламӗш парторганизацисене, пӗччен коммунистсене пулӑшас йенӗпе ытларах ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем пӗлеҫҫӗ, хуҫалӑх ӗҫӗнче ҫитӗнӳ тума политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатни кирлӗ.

А. Михайлӑв.

—o—

Учителагитаторсем

Ухман (Шӑхасан р-нӗ) йалсоветӗнче пурӗ 12 учител. Вӗсем пурте иртнӗ суйлав кампанийӗнче агитаторсем пулса ӗҫленӗ. Унчухне учительсен вӑйӗпе 1000 суйлавҫӑна Сталинла Конституципе суйлав саккунне кружоксенче вӗрентнӗ.

Учитӗлсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене хатӗрленес ӗҫре те активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Кашни учител-агитатора уйрӑм участкӑ ҫумне ҫирӗплетнӗ.

Учитӗлсем умӗнче тӑракан тепӗр ответлӑ ӗҫ вӑл—хут пӗлменнисене вӗрентесси. Ухман йалсоветӗнче хут пӗлменнисем 20 ҫын, сахал пӗлекенсем 27 ҫын. Вӗсене учитӗлсем вӗрентеҫҫӗ.

Ал. Солов йов.

Шупашкар ӗҫҫыннисен канӑвӗ

Иртнӗ канмали кун, ийунӗн 18-мӗшӗнче, Шупашкар хулинчи ӗҫҫыннисем—10 пин ҫын ытла—Атӑл лешйенне, вӑрманти, улӑхри уҫӑ сывлӑша, хӗвел питӗнчи хӑйӑр ҫине канма тухрӗҫ.

Совет суту-илӳ работникӗсем, пичет работникӗсем тата ыттисем те РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ йатпа массовкӑ туса иртерчӗҫ. Чӑваш республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат Т. А. Ахазӑв йулташ хӑйӗн суйлавҫисемпе тӗл пулчӗ.

Атӑл лешйенче ларйок, минераллӑ шывсем сутакан киоск, квас, мороженӑй сутакансем пулчӗҫ. Чылай организацисем хӑйсен буфечӗсемпе пынӑ.

Канмали кун савӑнаҫлӑн иртрӗ. Анчах... перевоз чылайӑшне тарӑхтарчӗ. Пӗтӗмпе те виҫӗ паром кӑна ӗҫленӗ пирки, нумай ҫынсем Атӑл урлӑ вӑхӑтра каҫаймарӗҫ. Хӑшӗсем кӑнтӑрла иртсен тин каҫма ӗлкӗрчӗҫ. Пӗртен пӗр касса умӗнче кунӗпех черет таталмарӗ.

Ӑнӑҫлӑ вӗреннӗ хыҫҫӑн

Пушнарти (Йетӗрне р.) тулликмар вӑтам шкул 1937—38 вӗренӳ ҫулне ӑнӑҫлӑ вӗҫлерӗ. Шкул халӗ, ачасем ҫуллахи вӑхӑта лайӑх ирттерччӗр тесе, физкулђтурӑ площатки турӗ. Унта ачасем волейболла, футболла выљаҫҫӗ, физкулђтурӑ ӑмӑртӑвӗсем туса ирттереҫҫӗ.

Пушнарта ийулӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пионерсен лагерӗ ӗҫлеме тытӑнать. Лагерте пурӗ 75 пионер пулмала.

Пӗлӳ тӗреслевӗ хыҫҫӑн шкул ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленме тытӑнчӗ. Халӗ кӑмакасене, партӑсене йусаттарнӑ. Ҫӗнӗрен 60 партӑ илнӗ.

Ҫавӑн пекех Иванђкаври пуҫламӗш шкул вутӑ кӳрсе хатӗрлерӗ, кӗнекесем, хут-тетрадсем илнӗ. Шкула йусама тытӑннӑ.

Ник. Цветков.

Учитӗлсен канмали пӳлӗмӗ

Шӑхасан районӗнчи пуҫламӗшпе вӑтам шкул работникӗсен комитечӗ районри учитӗлсем вађђи ҫуллахи вӑхӑтра канмали пӳлӗм организациленӗ. Пӳлӗме Шӑхасанти вӑтам шкулта тунӑ. Вӑл пӳлӗмре учитӗлсем шашкӑла, шахмӑтла, биллиардла, доминола выљаҫҫӗ, тӗрлӗрен хаҫат журналсем вулаҫҫӗ.

Пӳлӗм таса, ҫутӑ, чечексем лартса тултарнӑ. Халђ вӑл пӳлӗмре Шӑхасанти вӑтам шкулта ӗҫлекенсем суйлавҫӑсене тӗрлӗрен ыйтусемпе справкӑсем пама консулђтаци пункчӗ организациленӗ.

Ку пӳлӗме кашни кунах 15—17 учител ҫӳрет. Пӳлӗм августӑн 25-мӗшчен ӗҫлемеле.

Дм. Йегорӑв.

Ответлӑ редакторӑ заместителӗ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР.

Канадӑри вӑрман промышлӗннӑҫ рабочийӗсен пурнӑҫӗпе кӗрешӗвӗ

Канадӑ економикинче вӑрман промышлӗннӑҫӗ малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑнса тӑрать. Вӑл ҫӗршыв ытти государствӑсене йӑвӑҫ тата пађпӑсем—хут тумалли чӗр тавар—ҫулсеренех питӗ нумай сутать. Вӑрман промышлӗнникӗсем питӗ те пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Ытларах тупӑш илесшӗн вӗсем рабочисене експлоатацилессине ҫулран ҫул вӑйлатса пыраҫҫӗ: вӑрман касакансен тата хӑма ҫуракан савӑтсенчи рабочисен ӗҫукҫине чакараҫҫӗ, ахалђ те тӳсме ҫук йавӑр ӗҫ условийӗсене тата та начарлатса пыраҫҫӗ.

Канадӑри „Дейли клерион" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, вӑрман промышлӗннӑҫӗнчи рабочи вӑтамран кунне 2 доллӑр ӗҫукҫи илет, тата вӑл та йулашки, чи ҫӗнӗ майсемпе ӗҫлесен ҫеҫ. Ӗҫ ҫезонлӑ йӗркепе пулса пынипе, чи кирлӗ таварсен хакӗсем уйрӑмӑнах хаклӑ пулнипе вӑрман промышлӗннӑҫӗнчи рабочисем выҫӑла-тутӑла ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ. Ӑнсӑртран килсе тухакан сурансем, уйрӑн сыхланмали техникӑ пулманнипе, тахҫантанпах массӑлӑн пулса пыраҫҫӗ. Британи Колумбийӗнче (Канадӑ провинцийӗ) йулашки 10 ҫул хушшинче вӑрман ӗҫӗнче 509 ҫын вилнӗ, 1.642 ҫын ӗҫе йурӑхсӑр пулнӑ тата 29.432 ҫын суранланнӑ. Ҫак ҫулӑн малтанхи уйӑхӗсенче ӑнсӑртран пулнӑ сурансемпе 14 рабочи вилнӗ.

Унта нимӗнле социаллӑ страховани те ҫук. Врачсене усранӑшӑн тата чирлӗ ҫынсене пулӑшу панӑшӑн хуҫасем рабочисен ӗҫукҫинчен йатарласа катса йулаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта „Пайнленд Тимбер компани" фирмӑ (Онтарио провинцийӗ) ҫак ӗҫ вађђи рабочисенчен 12.000 доллӑр пухнӑ.

Ҫав укҫаран ҫуррине икӗ ҫамрӑк врача усрама тата кивӗ баракра пулђница тума тӑкакланӑ. Ҫав укҫан тепӗр ҫуррине фирма хӑйӗн служӑшчийӗсене тӳлеме тӑкакланӑ.

Рабочисене ҫавнашкал ҫаратни унта сайра пулакан ӗҫ мар.

Вӑрман касакансемпе хӑма ҫуракансем питӗ йапӑх казармасенче пурӑнаҫҫӗ. Вӗсенче йӗпе, сивӗ. Койкӑсене икшер рет лартса тухнӑ. Казармасенче пушӑ койкӑсем нихҫан та пулмаҫҫӗ. Пӗр койкӑ ҫинче икшер рабочи ҫывӑрни те час-часах пулать. Апат-ҫимӗҫ питӗ начар. Ӑна та таса мар, тутӑхса пӗтнӗ чашкӑ-тирӗксемпе параҫҫӗ.

Паллах ӗнтӗ, Канадӑри вӑрман промышлӗннӑҫ рабочийӗсем йавӑр експлоатацийе тата пурнӑҫри йапӑх условисене хирӗҫ вирлӗн кӗрешеҫҫӗ. Рабочисенчен ытларах пайӗ икӗ профсойуза пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Ҫак ҫулхи йанвар уйӑхӗнче Онтарио провинцинчи вӑрман ӗҫӗнче ӗҫлекен 4.000 рабочи забастовкӑ организациленӗ. Вӗсем ӗҫукҫине ӳстерме тата бараксенче санитари условийӗсене лайӑхлатма ыйтнӑ. Забастовкӑ ирттернипе рабочисем 1939 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшне ҫитиччен хуҫасемпе коллективлӑ догӑвӑр тума пултарнӑ. Догӑвӑрта ӗҫукҫине ӳстерме, апат-ҫимӗҫе, медицинӑ пулӑшуне тата пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатма палӑртнӑ.

Квебек провинцийӗнче 30.000 рабочи 6 уйӑх хушши ӗнтӗ коллективлӑ догӑвӑр тӑвасшӑн кӗрешеҫҫӗ. Унта кӗске срук хушшинчех 25.000 йахӑн рабочи профсойуза кӗнӗ.

Хуҫасем профсойуз членӗсене хӗсӗрлеҫҫӗ, профсойуз активне ӗҫрен кӑлараҫҫӗ, сутӑн илнӗ пуҫлӑхсем йӗртсе пыракан хӑйсен профсойузӗсене тума хӑтланаҫҫӗ. Анчах рабочисем вӑл профсойуза кӗмеҫҫӗ.

Онтарио провинцинче „Шевлин Кларке компани" фирминче вӑрман ӗҫӗ ӗҫлекен 400 рабочи, ӗҫ укҫине 10 процент чакарнине хирӗҫ протестлесе, 3 ерне ытла ӗнтӗ забастовкӑ тӑваҫҫӗ. Забастовкӑ тӑвакансене профсойуз укҫапа пулӑшса тӑрать.

Рабочисем профсойуза пӗрлешнине хирӗҫ кӗрешме хуҫасем уйрӑм ҫынсене сутӑн илеҫҫӗ, профсойуз членӗсене хура спискӑ ҫине ҫыраҫҫӗ тата рабочисем хушшинче шпионаж организацилеҫҫӗ. „Дейли клерион" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, майӑн 1-мӗш кунӗ Торонто хулинче (Онтарио провинцийӗ) хӑшпӗр рабочисем демонстрацине маскӑсем тӑхӑнса тухнӑ. Вӗсем ҫапла хӑйсен пичӗсене хуҫасен йӗрлевҫисенчен пытарнӑ. Профсойуз членӗнче тӑманнисене хуҫасем хӑшпӗр чух авантарах условисем параҫҫӗ. „Пайнленд Тимбер компани" фирмӑ суранланнӑ пирки укҫа тӳлеме ыйтса зайавлени паракан рабочисем вађђи йатарласа бланкӑсем хатӗрленӗ. Ҫав бланкӑсенче: „Есӗ профсойузӑн организаторӗ йе агитаторӗ мар-и?—тесе ыйтакан графа пур. Ун пек пулни ҫинчен пӗлтерекен ответ пулсан вара, администраци, суранланнӑ пирки хӑшпӗр чух паракан пӗчӗк пулӑшӑва та памасть.

Хуҫасем хӗсӗрленине, хӑйне йеверлӗ террор тунине пӑхмасӑрах рабочисем профсойуза кӗреҫҫӗ. Вӑрман промышлӗнникӗсене хирӗҫ кӗрешесси сарӑлса, ҫирӗпленсе пырать.

Ҫапла пурӑнаҫҫӗ тата кӗрешеҫҫӗ Канадӑри вӑрман промышлӗннӑҫ рабочийӗсем.

П. Ремизӑв.

ЧӐВАШАВТОГУЖТРЕСТ

автомашинӑ запас пайӗсене, малтан ӗҫре пулнисене—

ЙӲНЕТНӖ ХАКПА СУТАТ

Ҫавнашкалах АМО моторсем (ӗҫе йама хатӗррисем) сутлӑх пур

тата ГАЗ моторлӑ иннӗ (ҫӳреме йурӑхлӑ) сутлӑх пур.

Ҫакӑдрӗспе ыйтмала: г. Чебоксары, Союзная, 4, Автогужтрест.

2—2

ДЕТКОМИҪҪИ ХАПРӐКӖ

ҪӐМ ТАПАКАН МАШИНӐ СУТАТ

ӗҫлеме йурӑхлӑ

Адрӗс: г. Чебоксары, улица Плеханова д. № 25. тел. 3—25 тов. Трофимову.

ДИРЕКЦИ.

Миђутинри хӑма савӑтне

Бухгалтӗр (расчот сӗтелӗн)

Счетовод-картотетчик

тата

пӑчкӑсем хӑйраса лартакан

КИРЛӖ

Хватер пур. Вутӑ-шанк тата ҫутӑ тӳлевсӗрех.

Адрӗс: г. Чебоксары, левый берег р. Волги, заводоуправлений.

ДЕТКОМИҪҪИН ПРОИЗВОДСТВӐ ПӖРЛЕШӲНЕ

йалан ӗҫлеме

плановик, бухгалтӗр-ревизор, каҫҫир тата електромонтор

КИРЛӖ

Атӑл тӑрӑхӗнчи вӑрман ӗҫ техникин институчӗ ҫумӗнчи рабфак

1938—1939 ВӖРЕНӲ ҪУЛӖНЧЕ

СТУДЕНТСЕНЕ ИЛЕССИ ҪИНЧЕН

ПӖЛТЕРЕТ

Зайавленисем 1-мӗш, II-мӗш тата III-мӗш курссене йышӑнаҫҫӗ.

Рабфака вӗренме 18 ҫултан пуҫласа 30 ҫула ҫитнисене илеҫҫӗ.

Пӗрремӗш курса вӑтам шкулта 7 ҫул, иккӗмӗш курса 8 ҫул, виҫҫӗмӗш курса 9 ҫул вӗреннисене илеҫҫӗ.

Зайавленисене ҫакнашкал документсемпе пӗрле памала:

1. Вӗренни ҫинчен свидетӗлствӑ.
2. Хӑш ҫулта ҫуралнине кӑтартакан свидетӗлствӑ.
3. Тӗплӗн ҫырнӑ автобиографи.
4. Сывлӑх мӗнлине тата шатра кастарнине кӑтартакан справкӑ.
5. Виҫӗ фото-картӑчӑ тата ответ пама 40 пуслӑх почтӑ марки.

Асӑннӑ документсене тӑратмасан зайавленисене йышӑнмаҫҫӗ.

Зайавленине ийунӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 15-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ, испытанисем августӑн 15-мӗш кунӗнчен пуҫланаҫҫӗ.

Пӗрремӗш курса кӗрес текенсенчен испытанире ҫакнашкал предметсем тӑрӑх ыйтаҫҫӗ: вырӑс чӗлхи тата литературӑ, математикӑ, географи, Конституци, йестествознани.

Иккӗмӗш курса: математикӑ, вырӑс чӗлхи тата литературӑ, йестествознани, физикӑ, географи тата Конституци.

Виҫҫӗмӗш курса: вырӑс чӗлхи тата литтературӑ, математикӑ, физикӑ, хими тата нимӗҫ чӗлхи.

Испытани хӑҫан пуҫланассине уйрӑмӑн ҫырса пӗлтереҫҫӗ. Паспорт испытанине пынӑ чухне пӗрле илсе пымала.

Рабфакра 3 ҫул вӗренмеле.

Вӗренме илнисене общежити, мӗнле вӗреннине курса 61 тенкӗрен пуҫласа 75 тенкӗ таран стипенди параҫҫӗ.

Занђатисем ҫентабӗрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

Зайавленисемпе документсене ҫак адрӗспе йамала:

Мари АССР гор. Йошкар-Ола, Поволжский лесорабфак — приемной комисси.

ДИРЕКЦИ.

2—2

Шупашкарти педогогикӑ училищи

1938—1939 вӗренӳ ҫулӗнче

III-мӗш класа вӗренекенсем илесси ҫинчен пӗлтерет

III-мӗш класа вӑтам шкулсенчен, рабфаксенчен вӗренсе тухнисене тата вӑтам шкул программи чухлӗ пӗлӳ илнисене илеҫҫӗ.

Вӗренме кӗрекенсен ҫул шучӗ 18 ҫултан 35 ҫула ҫитиччен.

Зайавленисене директор йачӗпе йамала йе килсе пама та йурать. Пӗрле ҫак документсем кирлӗ:

а) Хӑш ҫулта ҫурални ҫинчен свидетӗлствӑ;
б) вӗренни ҫинчен свидетӗлствӑ;
в) икӗ фотокартӑчкӑ (кашнин ҫине ал пусса ҫирӗплеттермеле);
г) сывлӑх пирки тухтӑрсенчен илнӗ хутсем;
д) почтӑ маркисем иккӗ 20-шер пуслӑх, ответ пама.

Документсем подлинниксем ҫеҫ кирлӗ.

Зайавленисене ийунӗн 15-мӗшӗнчен августӑн 15-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ.

III-мӗш класа кӗрекенсем, вӑтам шкултан вӗренсе тухни ҫинчен аттестат илнисемсӗр пуҫне, августӑн 16-мӗшӗнчен пуҫласа 28-мӗшӗччен ҫак предметсемпе вӑтам шкул программи тӑрӑх испытани тытаҫҫӗ: математикӑпа, вырӑс чӗлхипе (ҫырупа тата сӑмахпа), тӑван чӗлхепе (ҫырупа тата сӑмахпа), географи тата истори (сӑмахпа), йестествознани (сӑмахпа). Вӑтам шкул пӗтерни ҫинчен аттестат тӑратнисене вӗренме кӗнӗ чух вырӑс чӗлхипе ҫеҫ тӗрӗслеҫҫӗ.

Вӗренме илнисене стипенди тата хватер вађђи укҫа параҫҫӗ.

Занђатисем ҫентабӗрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

АДРӖС: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 84.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 301

Изд. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест, Заказ № 800.